Чăваш Республикин Элĕк районĕн
«Ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека»
муниципаллă культура бюджет учрежденийĕ

Вăхăт таппи: çулсем, çынсем, сăнсем

Элĕк ен çыравçисем çинчен

Биобиблиографи указателĕ

Элĕк, 2011

ББК 78.5г
В22

Вăхăт таппи: çулсем, çынсем, сăнсем: [Элĕк ен çыравçисем çинчен]: биобиблиографи указателĕ / пухса хатĕрлекенĕ Т. Н. Мясникова; Чăваш Республикин Элĕк районĕн «Ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека» муниципаллă культура бюджет учрежденийĕ. – Элĕк, 2011. – 62 с.

Методикăпа библиографи уйрăмĕ

Чăваш Республикин Элĕк районĕн «Ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека» муниципаллă культура бюджет учрежденийĕ, 2011

429250, ЧР, Элĕк районĕ, Элĕк сали, Советски урамĕ, 13 çурт
Тел.: 8(3535)2-29-07
E-mail: alik_bib@cbx.ru

«Элĕк ен çыравçисене мухтаса та, асăнса та …»

Айдаш, Ю. **Саша Волкова**, пурăннине: сăвă / Ю. Айдаш // Тăван Атăл. – 1996. - № 10. – С.71.

Айхи, Г. Салампи çыравçине: сăвă [**А. С. Артемьева** халалланă сăвă] / Г. Айхи // Хресчен сасси. – 2000. – 14 сент.

Белов, Г. «Ентешĕмĕр **Максим Ястран**…»: сăвă / Г. Белов // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведении очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С.292 – 293.

Давыдов-Анатри, В. И. **Тукташ** тăпри: сăвă / В. И. Давыдов-Анатри // Давыдов-Анатри, В. И. Шурăмпуç хăпарсан: сăвăсемпе поэма / В. И. Давыдов-Анатри. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1977. – С. 110.

Ефимов, А. Чăваш ялĕнчи учитель: сăвă [**Арсений Ефимов** хăй çинчен çырнă сăвă] / А. Ефимов // Пурнăç çулĕпе. – 2005. – 4 июнь. – С.5.

Сементер, Ю. С. Композитор: сăвă [**Филипп Лукина халалланă сăвă]** / Ю. С. Сементер // Сементер, Ю. С. Чĕнтĕрлĕ кĕпер: сăвăсемпе поэма / Ю. С. Сементер. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. – С. 114.

Теветкел, М. **Виссарион Синичкина**: сăвă / М. Теветкел // Тăван Атăл: [Элĕксене халалланă номер]. – 1996. - № 6. – 74 с.

ТУПМАЛЛИ

Умĕн калани………………………………………………… ………5
Ананьев А. А ………………………………………………………..6
Артемьев А. С…………………………………………………………8
Афанасьев (Сереп) А. Т. ……………………………………………11
Афанасьев Е. А……………………………………………………….11
Васянка Н. Т…………………………………………………………13
Волков А. И…………………………………………………………..15
Галкин А. А. …………………………………………………………16
Емельянов П. К. ……………………………………………………18
Ефимов А. Е. ………………………………………………………..19
Железнов П. Ф. ……………………………………………………..21
Золотов А. А. ……………………………………………………….22
Золотов (Арис) А. И. ………………………………………………23
Золотов В. Т. ………………………………………………………..25
Золотов В. А. ………………………………………………………..26
Золотов (Ют) Н. Я. …………………………………………………28
Канюков В. Я. ………………………………………………………30
Ларионов Н. Л. ……………………………………………………..31
Лукин А. В. ……………………………………………………… 33
Малов А. В. …………………………………………………………34
Мальцев (Кенаш Мучи) Г. С. ……………………………………..35
Матьянова (Телейпи) И. В. ………………………………………37
Муратов Ф. Ф. ………………………………………………………38
Николаева М. Н. ……………………………………………………39
Осипова Е. Б. ………………………………………………………40
Пласкин Г. А. ……………………………………………………….41
Родионов И. (Ĕмĕт) ………………………………………………42
Савельев Г. А. ……………………………………………………...43
Синичкин В. В. ……………………………………………………...44
Смолина Л. В. ………………………………………………………45
Терентьев Ю. П. ……………………………………………………46
Тукташ (Семенов) И. С. …………………………………………..47
Федоров (Урмай) Н. Ф. ……………………………………………51
Федотова-Оланьгай Л. А. …………………………………………52
Харлампьев (Пилеш) Г. Д. ………………………………………..53
Эйзин (Димитриев) П. Е. …………………………………………55
Яковлев Г. А. ………………………………………………………..57

Ямаш (Михайлов) В. С. ……………………………………………58
Ястран (Григорьев) М. Г. ………………………………………..59
Усă курнă литература……………………………………………61
«Элĕк ен çыравçисене мухтаса та, асăнса та …» приложени…………………………………………………………..62

Усă курнă литература:

Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – 636 с.: ил.

Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – 558 с.: портр.

Дубанов, И. С. Географические названия Чувашской Республики: краеведческий словарь / И. С. Дубанов. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2010. – 495 с.

Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – 354 с.

Краткая чувашская энциклопедия. – Чебоксары: Чуваш кн. изд-во, 2001. – 526 с.: ил.

Писатели: очерки. Т.6. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2008. – 398 с.: ил.

Русско-чувашский словарь. 40 000 слов / под ред. И. А. Андреева, Н. П. Петрова. – М.: Советская энциклопедия, 1971. – 893 с.

Тăван Атăл: [Элĕксене халалланă номер]. – 1996. - № 6. – 74 с.

Элĕк енĕн самана сассиллĕ поэзийĕн классикĕсем / пухса хатĕрлекенĕ В. А. Иванов; «Элĕк ачи» ентешлĕх. – Шупашкар, Элĕк, 2006. – 67 с.

Элĕк поэзийен ахах-мерченĕ / пухса хатĕрлекенĕ В. А. Иванов; «Элĕк ачи» ентешлĕх. – Шупашкар: Çĕнĕ Вăхăт, 2009. – 76 с.

Юрьев, М. И. Чăваш писателĕсем: биобиблиогр. справ. / М. И. Юрьев. – Шупашкар: Чăваш АССР кĕнеке изд-ви, 1968. – 371 с.

Юхма, М. Чăваш литературин çĕнĕ çăлтăрсем / М. Юхма // Пурнăç çулĕпе. – 2005. – 8 окт. – С.5.

М. Ястран-лирик, хӑйӗн чылай сӑввисенче тӑван тавралӑх илемне сӑнласа парать.

Максим Григорьевич фронтра 1942 ҫулхи сентябрӗн 11-мӗшӗнче паттӑрла пуҫне хунӑ. 1962 ҫулхи май уйӑхӗнче ӑна вилнӗ хыҫҫӑн СССР писателӗсен Союзӗн членне илнӗ. Поэт ҫырнисене халиччен тӑватӑ кӗнеке кӑларнӑ: «Хӗрлӗ ҫӑлтӑр» (сӑвӑсем, 1940), «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» (сӑвӑсем, 1941), «Лирика» (1964), «Сӑвӑсемпе поэмӑсем» (1986).

М. Г. Ястранӑн пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ ҫинчен: *Статьясем*

Максим Григорьевич Ястран (Григроьев):ст. // Ефимов, Л. А. Элӗк енӗ: историпе краеведении очеркӗсем / Л. А. Ефимов. – Элӗк, 1994. – С.292-293.

Пурӑннӑ пулсан 90 ҫул тултаратчӗ // Пурнӑҫ ҫулӗпе. – 2006. – 26 авг. – С. 3.

Ястран Максим Григорьевич: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.553-554: портр.

Максим Ястран, поэт // Ананьев, А. А. Вӑрманкас Юнтапа ялӗ: ӗлӗкхипе хальхи / А. А. Ананьев. – Шупашкар: Ҫӗнӗ Вӑхӑт, 2008. – С. 167-173.

Ефимов, Е. Л. Ястран (Григорьев) Максим Григорьевич: ст. / Е. Л. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 622-623: портр.

Ананьев, А. Вулавӑш – Ястран ячӗпе: сӑвӑ / А. Ананьев // Пурнӑҫ ҫулӗпе. – 2011. – 3 сент. – С. 6.

Ананьев, А. Кӗнекене тупра пекех упрать: [Максим Ястранӑн «Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр» кӗнеки ҫинчен] / А. Ананьев // Пурнӑҫ ҫулӗпе. – 2011. – 17 сент. – С.1.

Ананьев, А. Сӑввисем илемлӗ, янӑравлӑ / А. Ананьев // Пурнӑҫ ҫулӗпе. – 2011. – 10 сент. – С.2.

Арланова, Е. Сӑмахпа та, ӑшалпа та / Е. Арланова // Пурнӑҫ ҫулӗпе. – 2011. – 27 авг. – С.2.

«Сан ҫинчен ҫыртӑм эп сӑвӑ-юрӑ, сӑмаха ахах пек суйласа»: [Максим Ястран ҫуралнӑранпа – 95 ҫул] // Тӑван Атӑл. – 2011. - №8. – С.91-94.

Умӗн калани

Элӗк районӗ талантсемпе пуян. Уйрӑмах пирӗн районтан тухнӑ писательсем тӑван литературӑна тӳпене ҫитиех ҫӗклес енӗпе питӗ нумай ырӑ ӗҫсем тунӑ.

Элӗк районӗнче, акӑ, мӗн тери талантлӑ ҫыравҫӑсем: Никифор Ваҫанкка, Александр Галкин, Аркадий Золотов, Аркадий Лукин, Илле Тукташ, Герасим Харлампьев, Максим Ястран, Виссарион Синичкин тата ыттисем те ҫуралса ӳснӗ. Вӗсен пултаруллӑхӗ - пирӗн наци пурлӑхӗ.

Хальхи вӑхӑтра та Элӗк районӗ пирӗн тӑван литературӑна ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ талантлӑ ҫыравҫӑсем парсах тарать: Г. А. Савельев, А. Е. Ефимов, Г. Я. Яковлев-Шумшеваш, А. А. Ананьев. Ҫамрӑк, хальхи ӑрурисем - Иван Ёмӗт (Родионов), Ирина Телейпи (Ираида Матьянова).

Указатель Элӗк енри поэтсемпе прозаиксен, драматургсемпе литературоведсен кун-ҫулӗпе тата пултаруллӑхӗпе кӗскен паллаштарать. Указателе писательсен союзӗн членӗсене кӗртнӗ. Биографисене алфавит йӗркипе вырнаҫтарнӑ, унта кашни писателӗн пичетленсе тухнӑ кӗнекисемпе пултаруллӑхӗ ҫинчен ҫырнӑ паллӑрах ӗҫсене, рецензисемпе статьясене кӗртнӗ.

Ананьев Александр Ананьевич
20.06.1930

А. А. Ананьев 1930 çулхи июнĕн 20-мĕшĕнче Анат Татмăш ялĕнче çуралнă. 1945 çулта Вутланти тулли мар шкул, 1948 çулта Нурăсри педагогика училищинчен вĕренсе тухнă. Унтан 1956 çулта виçĕ курслă çар академине, 1963 çулта чăваш патшалăх педагогика институтĕнчи физикăпа математика факультетне вĕренсе пĕтернĕ. Нумай çул хушши Вутлан шкулĕнче учительте, директорта тăрăшнă.

А. Ананьев Вутланти шкул музейне пуçарса янă. 2001 çултанпа ăна Элĕк районĕн вăрçăпа ĕç ветеранĕсен Совечĕн ертÿçине лартнă.

Александр Ананьевич Элĕк район энциклопедине çырса хатĕрлеме пулăшнă. Унăн чи паллă кĕнекисем: «Элĕкьен аталанăвĕ» (2000), «Календарь знаменательных и юбилейных дат Аликовского района» (2000), «100 лет Раскильдинской Рождества Богородицкой церкви Аликовского района Чувашской Республики» (2002, в соавторстве), «Военному комиссариату Аликовского района 65 лет» (2003, в соавторстве), «Православи тĕнĕ çинчен: çамрăксемпе ачасем валли» (2003), «Что надо знать верующим о православной вере» (2004), «90 лет Вотланской средней общеобразовательной школе Аликовского района Чувашии: архивные документы, воспоминания» (2004), «Офицеры Великой Отечественной… (Уроженцы Аликовского района Чувашской Республики)» (2005), «Вăрманкас Юнтапа ялĕ: ĕлĕкхипе хальхи» (2008), «Повесть о прожитых годах» (2008), «Календарь 2009. Праздники церковные, государственные, профессиональные. Юбилеи и дни рождения» (2009), «Подвиги афганцев» (2010).

А. Ананьева нумай çул ĕçленĕшĕн, хастар пулнăшăн медальсемпе хисеп грамотисемпе чысланă, кăкăр çине çакмалли паллăсем панă. Александр Ананьевич – Чăваш Республикин писателесен союзĕн членĕ, Республикăри краеведсен союзĕн хисеплĕ краевечĕ тата Халăх академикĕ.

Владимир Михайлович поэт-прозаик – Раççей тата Чăваш çыравçисен Союзĕн членĕ.

В. С. Ямаш пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:
Статьясем

Савельев, Г. А. Ямаш (Михайлов) Владимир Семенович: ст. / Г. А. Савельев // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 616: портр.

Ястран (Григорьев) Максим Григорьевич
26.08.1916-11.09.1942



М. Г. Ястран 1916 çулхи августăн 26-мĕшĕнче Вăрманкас Юнтапа ялĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Вăл малтан Ассакассинчи колхоз çамрăксен шкулĕнче вĕренет. Шкулта вĕреннĕ чухнех сăвăсем çырма пуçлать. 1932-1935 çулсенче вăл Шупашкарти медицина рабфакĕнче вĕреннĕ. 1936-1939 çулсенче поэт «Пионер сассипе» «Çамрăк большевик» хаçатсен тата «Хатĕр пул» журнал редакцийĕсенче, 1940-1941 çулсенче республикăри Халăх пултарулăх çуртĕнче ĕçленĕ. Пĕр хушă Максим Григорьевич пирĕн районти «Колхоз хаçачĕ» хаçат редакцийĕнче ответлă секретарьте те ĕçленĕ. Мускаври А. М. Горький ячĕпе хисепленекен Литература институтĕнче заочно вĕреннĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан М. Ястран «Чăваш коммуни» хаçат редакцийĕн районсене тухса çÿрекен корреспонденчĕ пулса тăнă. 1942 çул пуçламăшĕнче фронта тухса кайнă. Çав çулах Сталинград патĕнче паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. 1942 çулта Сталинград фронтĕнчен ярса панă «Атьăр, тантăшсем!» сăвă «Сунтал» журналта пичетленсе тухать.

Унăн «Çич сунатлă ăмăрткайăк», «Асамлă лампа», «Темĕскер-мĕскер», «Сергей Киров» ятлă поэмисем çĕнĕ пурнăç тăвакан ĕçчен халăхăн иксĕлми хастарлăхне мухтаççĕ.

Министерствăпа Раççей Федерацийĕн культура ĕçченĕсен профсоюз комитечĕн Хисеп грамотипе наградăланă, ытти чылай патшалăх наградисене те тивĕçлĕ вăл.

Г. А. Яковлевăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Афанасьев, П. Унăн хавалĕ - чĕре сунталĕ / А. Афанасьев // Яковлев Г. А. Чĕре хĕлхемĕ: сăвăсемпе поэмăсем / Г. А. Яковлев. – Çĕрпӳ, 2000. – С.4-7.

Ефимов, Е. Л. Яковлев Геннадий Александрович: ст. / Е. Л. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 613: портр.

Ямаш (Михайлов) Владимир Семенович
19.09.1939 – 07.08.2005

В. С. Ямаш 1939 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче Мăн Ямаш ялĕнче çуралнă, ултă çултах хăр тăлăха юлнă: ашшĕ фронтра пуçне хунă, амăшĕ йывăр чирпе çĕре кĕрет… Ахальтен мар ĕнтĕ хурапа шурра тӳссе халăхра сассине панă çыравçăн хайлавĕсем чуна витерӳллĕ, ĕнентерӳллĕ. Кашни пулăма чун тĕкĕрĕ витĕр сăрхăнтарса кăларать автор.

Ялти çичĕ класлă шкултан вĕренсе тухсан вăл клубра вăй хурать, унтан Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанашри вăтам шкула лайăх паллăсемпе пĕтерет. Çĕрпӳри профтехучилище хыççăн ăна Сĕнтĕрвăрри комсомол райкомне ĕçе йыхравлаççĕ, çав çулах вăл куçăмсăр майпа И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне вĕренме кĕрет. Каярах тата Чулхулари партин аслă шкулĕнче пĕлӳ илет.

В. Ямашăн çакăн пек кĕнекесем тухнă: «Хамăр ялсем», «Тăлăхсем эпир, талăхсем», «Пур юрату, пур» (2002), «Пурнăçа юратса» (2002), «Хĕллехи вăрманта» (2003) тата ыт.

А. А. Ананьев пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Кĕнекесем

Ананьев, А. А. Повесть о прожитых годах / А. А. Ананьев. – Чебоксары: Новое Время, 2008. – 104 с.: ил.

Статьясем

Светлова, С. «Ырра хирĕç усал тунине курман-ха» / С. Светлова // Пурнăç çулĕпе. – 2002. – 22 февр. – С. 2.

Егоров, В. Ананьевсен вунă вĕрентекен / В. Егоров // Пурнăç çулĕпе. – 2007. – 6 окт. – С. 5.

Кĕнеке авторĕ çинчен // Ананьев, А. А. Вăрманкас Юнтапа ялĕ: ĕлĕкхипе хальхи / А. А. Ананьев. – Шупашкар: Çĕнĕ Вăхăт, 2008. – С. 197.

Ветеран – районăн хисеп кĕнекинче // Пурнăç çулĕпе. – 2009. – С.1.

Ефимов, Е. Л. Ананьев Александр Ананьевич: ст. / Е. Л. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С.54-55: портр.

Корнилов, Ю. Чуна итлесе пурăнсан ĕç те ăнăçать / Ю. Корнилов // Пурнăç çулĕпе. – 2009. – 21 февр. – С. 5.

Лаврентьева, В. Аллă çул пĕрле пурăнсан кăна туй тунă / В. Лаврентьева // Пурнăç çулĕпе. – 2010. – 13 янв. – С. 3.

Павлов, В. Сакăр теçеткери ватăлман ветеран / В. Павлов // Пурнăç çулĕпе. – 2010. – 19 июнь. – С. 2.

Корнилов, Ю. Ватлăхра та хастарлăх шăранса пĕтмест / Ю. Корнилов // Пурнăç çулĕпе. – 2011. – 22 окт. – С. 5.

Артемьев Александр Спиридонович
14.09.1924 - 05.08.1998



А. С. Артемьев 1924 çулхи Тури Выл ялĕнче çуралнă.

Вăтам шкултан вĕренсе тухсан, Совет Çарне кайнă. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче малтан ахаль салтак, кайран кĕçĕн командир пулнă. Ăна паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн тăвата медальпе наградăланă.

1947-1948 çулсенче А. Артемьев «Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманах редакцийĕсенче ĕçленĕ. Вăл А.М.Горький ячĕпе хисепленекен Литература институтĕнчен заочно вĕренсе тухнă.

Александр Артемьев 1951 çултан – СССР писателĕсен Союзĕн членĕ пулса тăнă.

1947 çулта «Ялав» журналта (11 №) писателĕн «Пĕчĕк Лийăн пысăк савăнăçĕ» ятлă малтанхи калавĕ пичетленнĕ. Çавăн хыççăн унăн калавĕсемпе повеçĕсем тăтăшах пичетленеççĕ, вĕсенчен паллăраххисем: «Асран кайми тĕлпулусем», «Çул уçă», «Атăл пăрĕ кайсан» (1948), «Ан авăн, шĕшкĕ!», «Çĕнтерӳçĕ каччăсем», «Юрату юррисем» (1949), «Нарспи», «Ылтăн» (1950), «Эпир миршĕн», «Çурхи ир», «Çурхи кун» (1951), «Чаплă хушамат», «Мир сачĕ» (1952), «Тăван сăмах», «Тав», «Пĕр чĕлхерен» (1953).

Писатель хăй произведенийĕсенче – колхозлă ял пурнăçне, совет çыннисен Аслă Отечественнăй вăрçăри паттăрлăхне, мирлĕ ĕçпе пурăнакан çынсен хастарлăхне, юрату темине сăнласа панă.

А. Артемьев критикăллă статьясемпе рецензисем те чылай çырнă, вĕсенче С. Элкер, Хв. Уяр, М. Ухсай, Илпек Микулайĕ, Н. Мранька, Трубина Мархви, В. Краснов-Асли, Н. Евстафьев, В.Алендей, А. Талвир, В. Ухли, В. Садай, В. Бурнаевский тата ытти писательсен пултарулăхне тишкернĕ.

Александр Спиридонович сăввисем тăрăх композиторсем сахал мар юрă хывнă («Юрату юрри», «Ăшă çумăр», «Ах, пĕлесчĕ» тата ыт. те).

Яковлев (Шумшеваш) Геннадий Александрович
26.10.1957

Геннадий Яковлев 1957 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕнче Шĕмшеш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Шкулта вĕреннĕ чухнех сăвăсем шăрçалама пикеннĕ вăл. Вĕсемшĕн тивĕçекен хăйĕн чи малтанхи гонорарне 7-мĕш класра вĕреннĕ чухнех илнĕ. Миçе çул ĕнтĕ Геннадий Александрович Яковлев литература лаççинче чун хавалĕпе чĕре сунталĕ çинче тĕрлĕ жанрпа калăпланă хайлавсем эрешлесе-шăратса туптать. Çав хушăра вăл чи çивĕч те кăсăклă темăсемпе çĕршер очерк, тĕрленчĕк, фельетон, чылай статьясемпе калавсем, повеçсем çырать. Унăн хайлавĕсем нумай кăларăмсенче – республика хаçат-журналĕсенче те, Мускавра тухса тăракан периодика изданийĕсенче те пичетленеççĕ.

2000 çулта Геннадий Яковлевăн «Юрату шуçăмĕ» («Заря любви») ятлă вырăсла çырнă сăвăсемпе памфлетсен кĕнеки кун çути курчĕ. Çав çулах сăвăсемпе поэмăсен кĕнеки пичетленсе тухнă - «Чĕре хĕлхемĕ» («Искры сердца»). Г. Яковлевăн лирикăлла сăввисемпе композиторсем вăтăр ытла юрă кĕвĕленĕ.

Геннадий Александрович виçĕ аслă шкул пĕтернĕ, специальноçĕсем те унăн нумай – педагог, филолог, журналист тата политолог. 1980–мĕш çултанпа Раççей журналисчĕсен Союзĕн членĕ, Раççей писателĕсен Союзĕн членĕ, «Советская Чувашия» тата Мускавра тухса тăракан «Сельская жизнь» хаçатсен штатра тăман корреспонденчĕ. 1990-мĕш çултанпа Сĕнтĕрвăрри район хаçачĕн редакцийĕнче, «Пирĕн сăмах» («Наше слово») хаçатăн тĕп редакторĕнче вăй хурать.

Пичете аталантарас ĕнĕпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн тата нумай çул хушши тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Г. А. Яковлева Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе 1997-мĕш çулта «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçчĕнĕ» хисеплĕ ят панă, Раççейри Пичет енĕпе ĕçлекен

П. Эйзинăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Дмитриев, И. «Кунти тавралăха хура тухатмăшсем «тухатнă»…» / И. Дмитриев, А. Хусанкай // Хыпар. – 1991. – 23 юпа.

Петр Егорович Дмитриев (Петр Эйзин):ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведении очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 279.

Петр Эйзин // Тăван Атăл. – 1996. - № 6. – С. 28.

Ильина, Н. Символ тата сăнар / Н. Ильина // Ялав. – 2000. - № 11.

60 лет со дня рождения Педера Эйзина // Çулталăк кĕнеки = Календарь года: 2003 / Нац. б-ка Чуваш. Респ.; соавт. П. А. Семенова, Г. П. Соловьева. – Чебоксары, 2002. – С. 117.

Хусанкай, А. «Тăнлав сунталĕ çинче сăмахăма туптать шăплăх…» / А. Хусанкай // Тăван Атăл. – 2003. - № 8.

Софронова, И. Петĕр Эйзин сăввисен хăйнеевĕрлĕхĕ / И. Софронова // Тăван Атăл. – 2004. - № 5.

Педер Эйзин (Димитриев Петр Егорович): ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.513-514: портр.

Ефимов, Л. А. Эйзин (Димитриев) Петр Егорович: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 604-605: портр.

Вырăс писателĕсемпе ытти халăхсен писателĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарас тĕлĕшпе те А. Артемьев тухăçлă ĕçлет (Д. Байрон, Г. Гейне, А. Пушкин, М. Лермонтов тата ыт.).

А. Артемьевăн çакăн пек кĕнекесем тухнă: «Ан авăн, шĕшкĕ!» (калавсем, 1950), «Хĕрлĕ çăлтăр» (повесть, 1952), «Юрату юррисем» (повеçсемпе калавсем, 1953), «Дорога открыта» (вырăсла куçарнă калавсем, 1954), «Атăл калавĕсем» (1956), «Салампи» (повесть, 1956, 1966), «Улма йывăç авăнать» (повесть, 1958), «Салтак калавĕсем» (1959), «Саламби» (вырăсла куçарнă повесть, Мускав, 1960), «Алтăр çăлтăр» (повеçсемпе калавсем, 1963), «Çунатлă çуралнисем» (повеçсем, 1965), «Хунавлах хăрнисем» (1970), «Симĕс ытлăн» (1972), «Шурă çӳçлĕ хĕр» (1974), «Тăвăл умĕн» (1975), «Çăкăр хакĕ» (1977), «Юлашки юрă» (1981), «Салампи» (1983), «Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ» (1984), Суйласа илнисем, икĕ томлă (1986).

А. Артемьев «Хисеп Палли» тата – «Халăхсен туслăхĕ» - орденсемпе наградăланă, ЧР Верховнăй Совет Президиумĕн грамотине парса чыс тунă. Вăл – чăваш халăх писателĕ (1980).

А. С. Артемьев пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Кĕнекесем

Горшков, А. А. Артемьевăн чĕлхипе стилĕ çинчен. Чĕлхене нормăлас ыйту: ст. пуххи / А. А. Горшков; Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи чĕлхе, лит., истори тата экономика наука тĕпчев институчĕ. - Шупашкар, 1985.

Иванов, И. И. Чăваш халăх писателĕ А. С. Артемьев: пурнăçĕпе пултарулăхĕ / И. И. Иванов. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1988. – 93 с.

Статьясем

Хлебников, Г. Витĕмлĕ ăсталăх / Г. Хлебников // Артемьев, А. С. Салампи: роман / А. С. Артемьев. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1991. – С. 248-255.

Александр Спиридонович Артемьев: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 274-275.

Федоров, Г. Авăнман шĕшкĕ тата пурнăç тăвăлĕ / Г. Федоров // Тăван Атăл. – 1994. - № 9. – С. 57-60.

Александр Артемьев // Çил çунат. – 1996. - № 1.

Давыдов-Анатри, В. Тавах сана, халăх писателĕ / В. Давыдов-Анатри // Хыпар. – 1999. – 14 авăн.

Маяксем, Л. Чĕлхе асамçи / Л. Маяксаем // Хыпар. – 1999. – 5 юпа.

Айхи, Г. Салампи çыравçине: сăвă / Г. Айхи // Хресчен сасси. – 2000. – 14 сент.

Петровский, Н. Пĕр суйланă çултан пăрăнмасăр… / Н. Петровский // Хыпар. – 2000. – 4 çурла.

Теветкел, Н. Пăшалпа та, перопа та / Н. Теветкел // Хыпар. – 2000. – 6 çу.

Вадимов, В. Здесь жил и творил писатель [Открытие мемориальной доски А. Артемьеву] / В. Вадимов // Совет. Чувашия. – 2002. – 17 сент.

Павлов, В. Пире эс кирлĕччĕ, çыравçă / В. Павлов // Пурнăç çулĕпе. – 2002. – 18 сент. – С. 2.

Ефимов, Г. Эпир – пĕр вăхăтрисем / Г. Ефимов // Тăван Атăл. – 2004. - № 9. – С. 79-81.

Павлов, В. Халăх генийĕ, çутă талант / В. Павлов // Пурнăç çулĕпе. – 2004. – 18 сент. – С.3.

Артемьев Александр Спиридонович // Ананьев, А. А. Офицеры Великой Отечественной … (Уроженцы Аликовского района Чувашской Республики): кн. памяти / А. А. Ананьев. – Чебоксары: Новое Время, 2005. – С. 139. – (Б-ка Чуваш. нар. акад.).

Артемьев Александр Спиридонович: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.32-33: портр.

Федоров, Г. И. Артемьев Александр Спиридонович: ст. / Г. И. Федоров, Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 69: портр.

Борисов, Б. Александр Артемьев – выла юрăçи / Б. Борисов // Пурнăç çулĕпе. – 2010. – 18 сент. – С. 7.

/ сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 554: портр.

Юрьев, К. Çак çуртра çыравçă пурăннă / К. Юрьев // Пурнăç çулĕпе. – 2011. -12 окт. – С.3.

Эйзин (чăн хушамачĕ Димитриев) Петр Егорович
01.08.1943



П. Е. Димитриев 1943 çулхи августăн 1-мĕшĕнче Энехмет ялĕнче колхозник çемйинче çуралнă. Малтанах Мартынкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулта, унтан Тивĕшри вăтам шкулта вĕреннĕ. 1965 çулта Чăваш патшалăх педагогика институтне вĕренме кĕнĕ. 1965-1966 çулсенче Совет Çарĕнче пулнă. 1967-1968 çулсенче Красноармейски район хаçатĕнче ответлă секретарьте ĕçленĕ. 1968 çултанпа - Чăваш кĕнеке издательствинче: корректор, художество тата ача-пăча литература редакцийĕн заведующийĕнче ĕçленĕ. Унăн сăввисемпе калавĕсем 1962 çултанпа пичетленме пуçланă. П. Димитриева СССР писателĕсен Союзĕн членне 1980 çулта илнĕ. 1984 çулта вăл «Венгри халăх юмахĕсем» вырăсларан чăвашла куçарнă. Çавăн пекех вăл шкул ачисем валли (5 класс) «Тăван чĕлхе» учебник çырса хатĕрленĕ. Унăн çак кĕнекесем чăвашла пичетленсе тухнă: «Виçĕ хĕлĕх» (1971), «Кăвайт» (1976), «Сар хĕвел» (1979), «Çĕмĕрт çути» (1980), «Тилĕ тус» (1983), «Анне пехилĕ» (1986), «Юлашки çил-тăман» (1991), «Савни юррисем» (2003) тата ыт.

1994 çулта П. Эйзина Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ ятне парса чыс тунă, Митта Ваçлейĕ ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ пулнă.

Хальхи вăхăтра Петр Эйзин Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕ пулса ĕçлет.

Г. Харлампьев çакăн пек кĕнекесем пичетлесе кăларнă: «Çамрăк художник» (1939), «Икĕ пьеса» (1949), «Тăрнасен ташши» (1952), «Пĕчĕк çеç юмахсем» (1955), «Çурхи кĕвĕсем» (1957), «Палюк мучи кĕнеки» (1958), «Иртнĕ çулсенче» (1959), «Утарта» (1964), «Илемлĕ ир» (1-3 кĕнекисем, 1964, 1966, 1970), «Юрату вилĕмсĕр» (1969), «Ытарайми çĕршывра» (1971), «Чуну таса пулсан» (1973), «Вăрман юрри» (1974), «Йăлтăр çăлкуç» (1976), «Пăшăлтисем» (1983). Вырăсла тухнă кĕнекесем: «Танец журавлей» (1955), «Голубята» (1962), «Танец журавлей» (1967), «Красивое утро» (1969), «На пасеке» (1981).

Г. Д. Харлампьева ĕçри çитĕнӳсемшĕн Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятне панă, Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Г. Д. Харлампьев пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Малов, А. Пархатарлă пурнăç / А. Малов // Хыпар. – 1993. – 26 нарăс.

Унтри, Я. Пултарулăх кaçалăкĕ / Я. Унтри // Ялав. – 1993. - № 2.

Герасим Дмитриевич Харлампьев (Пилеш): ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 290-292.

Желтухин, Г. Ӳнерçĕ те, те çыравçă та // Тăван Атăл. – 2003. - № 2.

Харлампьев Герасим Дмитриевич // Ананьев, А. А. Офицеры Великой Отечественной… (Уроженцы Аликовского района Чувашской Республики): кн. памяти / А. А. Ананьев. – Чебоксары: Новое Время, 2005. – С. 99-100. – (Библиотека Чувашской народной академии).

Харлампьев (Пилеш) Герасим Дмитриевич: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.465-466: портр.

Ефимов, Л. А. Харлампьев (Пилеш) Герасим Дмитриевич: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия

Афанасьев (Сереп) Анатолий Трофимович 1920-2003

Анатолий Трофимович Афанасьев (Анат Сереп) Мăн Тукташ ялĕнче 1920 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче çуралнă. Нурăс педучилищинчен вĕренсе тухсан Çĕмĕрле районĕнчи Вăрманкас ялĕнче ачасене вĕрентнĕ. 1942 çул пуçламăшĕнче вăрçа кайнă, паттăр çапăçнă. 1945 çулхи çуркунне йывăр аманса киле таврăннă. Вăрçă хыççăн Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтернĕ.

Вăл нумай çул вăрçă суранĕсемпе нушаланса пурăннă. Çапах, мăшăрĕ пулăшнипе, пилĕк кĕнеке кăларнă. 1994 çулта ăна Чăваш писательсен союзне илнĕ.

А. Т. Афанасьев пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Тимофеев–Ыхра, А. Мăн Тукташ Корчагинĕ / А.Тимофеев–Ыхра // Пурнăç çулĕпе (Элĕк р–нĕ). – 2000. – 9 раштав.

Чул хушшинчи чун // Пурнăç çулĕпе (Элĕк р–нĕ). – 2000. – 31 çу.

Ялгир, П. А. Афанасьев (Сереп) Анатолий Трофимович: ст. / П. А. Ялгир // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 82.

Афанасьев Егор Афанасьевич 02.10. 1922 – 25.07.1980



Е. А. Афанасьев 1922 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнче Хурăнсур ялĕнче çуралнă. 1940 çулта Етĕрнери педагогика училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн кĕçĕн класс ачисене вĕрентнĕ. Унтан Çĕмĕрлери «Вперёд» хаçатра, «Ялав» журнал редакцийĕнче вăй хунă. 1968 çулта вăл

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Ленин ялавĕ» хаçатра ĕçлеме тытăнать.

Е. Афанасьев уйрăмах ачасем валли кĕнекесем çырассипе чылай тăрăшнă, вунă кĕнеке ытла пичетлесе кăларнă. Пирвайхи кĕнеки 1961 çулта «Пирĕн пĕчĕк Кентти» ятпа «Ача-пăча литератури» издательствинче вырăсла кун çути курнă. Унăн чăвашла тухнă кĕнекисенчен çаксене асăнмалла: «Сăвăсемпе юмахсем» (1949), «Ши-шăнкăрч» (1964), «Пирĕн ял ачисем» (1965), «Сухан» (1969).

Е. Афанасьев сăввисене хрестоматисене те кĕртнĕ. Г. Терентьевпа пĕрле çырнă «Выигрыш» пьесăна Чăваш академи театрĕн сцени çинче темиçе хут та лартнă. «Мĕнле пурăнатăн, Атăл» пьесăпа республикăра ирттернĕ конкурсра 3 вырăн йышăннă. 1980 çултанпа – СССР писателĕсен Союзĕн членĕ.

Е. А. Афанасьев 1980 çулхи июлĕн 25-мĕшĕнче вилнĕ.

Е. А. Афанасьев пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Егор Афанасьевич Афанасьев: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 275-276.

Анисимов, Г. Ятне асрах тытатăп / Г. Анисимов // Çĕмĕрле хыпарĕ. – 1997. – 7 юпа.

Степанов, В. Поэт, драматург / В. Степанов // Пурнăç çулĕпе. – 1997.

Афанасьев Егор Афанасьевич: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.45: портр.

Ефимов, Л. А. Афанасьев Егор Афанасьевич: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 82: портр.

Харлампьев (Пилеш) Герасим Дмитриевич
25.02.1913-14.11.1944

Г. Д. Харлампьев 1913 çулхи февралĕн 25-мĕшĕнче Мăн Тукташ ялĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. 1926 çулта пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă. Унтан Хутарти шкулта, Нурăсри профшкулта икĕ çул хушши столяр ĕçне вĕреннĕ. Красноармейскинчи Упири 6 çул вĕренмелли шкулта ĕç учителĕ пулнă. Малалла вĕренес ĕмĕтпе Горький хулине тухса кайнă, педагогика рабфакĕнче вĕреннĕ. Тепĕр çултан Мускаври художество техникумне куçса кайнă. Техникумран вĕренсе тухнă хыççăн Чăваш кĕнеке издательствинче илемлĕ ӳкерчĕксен редакторĕнче вăй хурать. 1935-1937 çулсенче – Хĕрлĕ Çар салтакĕ. Унтан таврăнсан каллех Чăваш кĕнеке издательствин художник-редакторĕ, çав хушăрах Художниксен союзĕн председателĕ пулать, Шупашкарти илемлĕ ӳнерĕн галерейне йĕркелес енĕпе те ырми-канми тăрăшать. 1942-1945 çулсенче Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннă.

Герасим Харлампьев республикăн пирвайхи гербĕн авторĕ те. Вăл 1940 çултанпа – СССР художникĕсен Союзĕн членĕ, 1962 çултанпа – СССР писательсен Союзĕн членĕ. Вăл талантлă писатель те. Г. Харлампьев «Марфа», «Пĕр колхозра», «Вĕрентрĕç», «Турикасра туй пулать», «Тимĕр кисĕп» тата ытти пĕр актлă пьесăсем, ачасем валли çырнă кĕске калавсем çырнă. К. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх академи театрĕнче умлă хыçлăнах «Çурхи кĕвĕсем», «Юрату вилĕмсĕр», «Юлашки тĕлпулу», «Чуну таса пулсан» пьесăсем тулли сасăпа янăраса кайнă. Çак спектаклĕсенчен халăх татăлман. Чăваш вулакане Г. Харлампьев калавĕсемпе юмахĕсене аван пĕлет. Автор чылайăшне ачасем валли çырнă. Унăн сăмахĕсемпе кĕвĕленĕ «Кăмăл уçăлни», «Çурхи кĕвĕсем», «Анлă Атăл хĕрринче», «Пурнăç лайăх» тата ытти юррисене чăваш çыннисем кăмăлласа юрлаççĕ. Г. Лебедев кĕвĕленĕ «Улăхра курсан чечек» юрă вара чăн халăх юррине куçрĕ.

Федотова-Оланьгай Любовь Александровна
07.03.1963



Л. А. Федотова-Оланьгай 1963 çулхи мартăн 7-мĕшĕнче Хуравар ялĕнче çуралнă. Вăл Тавăтри вăтам шкула (1980), Шупашкарти машинăсем тăвакан техникума (1986), бухгалтерипе менеджерсен курсĕсене (1993) пĕтернĕ. 1980-1993 çулсенче Шупашкарти приборсем тăвакан заводăн ача-пăча садĕнче, механика цехĕнче токарьте, инженер-диспетчер, экономист пулса ĕçленĕ. 1994-2006 çулсенче – республикăри акционерсен çурт-йĕр тăвакан «Монолитстрой» уçă обществин яваплă специалисчĕ. 2006 çултанпа тулли мар яваплă «Трейд-Инвест» ĕç коллективĕнче суту-илĕвĕн ыйтăвĕсене татса парас ĕçре вăй хурать.

Л. Федотова-Оланьгайăн пĕрремĕш сăвă йĕркисем 1986 çулта хут çине выртнă.

Л. Оланьгай тĕрлĕ хаçат-журналта пичетленсех тăрать. Унăн хайлавĕсене «Ялав», «Тăван Атăл» тата «Лик» журналсенче, «Кладовая природы», «Православный собеседник», «Молодежный курьер», «Çамрăксен хаçачĕ», «Советская Чувашия» республика хаçачĕсенче тата «Тăван ен», «Пурнăç çулĕпе» район хаçачĕсенче тупса вулама пулать.

Унăн харăссăнах вырăсла тата чăвашла кĕнекесем тухаççĕ. Виçĕ кĕнеке авторĕ: «Лань луговая» (2000), «Атте пехилĕ» (2004), «Белые Одежды» (2006).

Л. А. Федотова-Оланьгай пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Любовь Федотова-Оланьгай // Тăван Атăл. – 2010. - № 11. – С.130-132.

Егоров, В. С. Федотова-Оланьгай Любовь Александровна:ст./ В. С. Егоров // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 544-545: портр.

Ваçанкка Никифор Тарасович
17.02.1903-29.07.1976

«Ваçанкка вăл – Ваçанкка, вăл вилĕмсĕр».
А. Ĕçхĕл, поэт

Н. Т. Ваçанкка 1903 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче Ураскилтре чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. 1914 çулта ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă, унтан Элĕкри шкулта вĕреннĕ. Элĕкри иккĕмĕш сыпăкри шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, хастар çамрăка Хусан комсомол кĕпĕрне комитечĕн Чăваш секцийĕнче ĕçлеме, чĕнсе илеççĕ. Кунта «Канаш» хаçата кăларас ĕçе хутшăнать, унта «Çамрăксен страницисем» кăларса тăма пулăшать. Поэт хăйĕн сăввисене те сахал мар пичетлет. Хусанта комсомол конференцийĕнче вăл Çеçпĕл Мишшипе паллашать. Икĕ сăвăç кун хыççăн пĕр-пĕрин хушшинче çыру çӳретме тытăнаççĕ. 1920-1922 çулсенче вăл Вăрнарти педтехникумра пĕлĕве ӳстернĕ. 1924-1927 çулсенче поэт Мускаври журналистика институтĕнче вĕренет. Литература каçĕсенче В. Маяковскипе тĕл пулса калаçать. Ваçанкка 1923 çулта чăваш писателĕсемпе журналисчĕсен «Канаш» союзне пысăк хаваслăхпа кĕрет. Кайран унăн пултарулла членĕсенчен пĕри пулса тăрать.

1932 çулта Н. Ваçанкка чăваш кĕнеке издательствинче ĕçлеме тытăннă. Илемлĕ литература кĕнекисем, шкул учебникĕсем кăларас енĕпе вăл пенсие тухиччен ырмиканми тăрăшнă.

Н. Ваçанкка халăх юрри-такмакне питĕ юратнă. Купăс ăста каланă май сăвăç вĕсене концертсенче те юрланă. Çавăнпах та пулĕ вăл композиторсемпе çывăх туслашнă. Унăн сăввисемпе В. Воробьев, Ф. Павлов, С. Максимов, И. Палантай, Г. Хирбю тата ыт. композиторсем те юрăсем хывнă.

Н. Ваçанккашăн литературоведени те ют пулман. Вăл тăрăшнипе 1928 çулта Çеçпĕл Мишши сăввисене пухса пĕрремĕш кĕнеке кăларнă. Куçару енĕпе те сăвăçă-çыравçă хăйĕн пултарулăхне кăтартнă. Сахал мар сăвă-юрă куçарнă.

Прозăлла произведенисенчен А. Пушкинăн «Дубровский» тата «Капитанская дочка» произведенийĕсене куçарнине палăртса хăвармалла.

1934 çултанпа – СССР писателĕсен Союзĕн членĕ. Никифор Тарасовичăн çак кĕнекесем тухнă - «Хастарлăх» (1926), «Ирхи сывлăм» (1928), «Октябрь çулĕ» (1931), «Чакак хăнисем» (1949, 1961, 1965), «Йăлăмра» (1966). Чăваш литературине аталантарас тĕлĕшпе чылай çул хушши пултаруллă ĕçленĕшĕн ăна РСФСР, Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн хисеплĕ ятне панă, «Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» значока та тивĕçнĕ вăл.

Н. Т. Васанкка пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Ялгир, П. «Васанкка вăл Васанкка» / П. Ялгир // Хыпар. – 1993. – 19 нарăс.

Васанкка, Н. «Кун-çул пушăлла иртмерĕ…» / Н. Васанкка // Ялав. – 1993. - № 4.

Васанкка Никифор Тарасович: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 276-278.

Ксенофонтова, А. Ентешĕмĕрпе мухтанатпăр / А. Ксенофонтова // Пурнăç çулĕпе. – 1998. – 17 нарăс.

Терентьев, Г. Хĕвеллĕ пурнăç юрăçи / Г. Терентьев // Пурнăç çулĕпе. – 1998. – 14 нарăс.

Копеева, Т. Çунатлă çамрăклăх юрăçи: [Н. Т. Васанкка поэт çинчен] / Т. Копеева // Пурнăç çулĕпе. – 2003. – 28 февр. – С. 3.

Терентьев, Г. Ураскилт таланчĕ: [Н. Васанкка çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май] / Г. Терентьев // Пурнăç çулĕпе. – 2003. – 8 февр. – С.3.

Васянка Никифор Тарасович: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.69-70: портр.

Никифор Васанкка // Тăван Атăл. – 2008. - № 10. – С. 150.

Терентьев, Г. Çеçпĕл Н. Васанкка патне çырнă çыру / Г. Терентьев // Пурнăç çулĕпе. – 2009. – 21 нояб. – С. 3.

Федоров (Урмай) Николай Федорович
1924 - апрель 1950

Н. Ф. Федоров 1924 çулта Шур Пайраш ялĕнче çуралнă. Мартинкассинчи шкул хыççăн Тивĕшри вăтам шкулта пĕлӳ илнĕ. Вăрçă хыççăн Мартынкасси шкулĕнче ачасене вĕрентнĕ. Сăвăсем хаçат-журналта чылай пичетленнĕ. Вăл çырнă «Александр Матросов» сăвă учебника та кĕнĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн 1947 çулта çамрăк писательсен республикинчи канашлăвĕнче Николай Урмай шанчăк паракан сăвăç, тесе палăртнă. Унăн сăввисем илемлĕ сăнарлăхĕпе, тарăн шухăшĕпе палăрса тăнă. Шел, вăрçăран таврăнсан вăл нумаях пурăнайман, 1950 çулта çĕре кĕнĕ.

Н. Ф. Федоров пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Николай Федорович Федоров (Урмай): ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 298.

Ефимов, Л. А. Федоров Николай Федорович:ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 542: портр.

Ефимов, Г. Тукташ мыскарисем / Г. Ефимов // Капкăн. – 1997. - № 23-24.

Микиш, П. Чăваш чĕлхин асамçи / П. Микиш // Ялав. – 1997. - № 7.

Сементер, Ю. Чăваш кĕвви çĕр хĕрĕх сумлă: [И. Тукташ çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май] / Ю. Сементер // Хыпар. – 1997. – 2 çурла. – С.2-3.

Давыдов-Анатри, В. Таким был наш Тукташ / В. Давыдов-Анатри // Совет. Чувашия. – 1997. – 6 авг. – С.3.

Тихонов, П. Кого почитают, того и отмечают / П. Тихонов // Совет. Чувашия. – 1997. – 6 авг.

Зайцев, Ф. Çаплаччĕ вăл пире вĕрентекен / Ф. Зайцев // Хыпар. – 2002. – 5 нарăс.

Тукташ Илья Семенович // Ананьев, А. А. Офицеры Великой Отечественной… (Уроженцы Аликовского района Чувашской Республики): кн. памяти / А. А. Ананьев. – Чебоксары: Новое Время, 2005. – С. 99. – (Библиотека Чувашской народной академии).

Тукташ (Семенов) Илья Семенович: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.422-423: портр.

Арланова, Е. Чăваш патшалăх гимнĕн авторĕ / Е. Арланова // Пурнăç çулĕпе. – 2007. – 1 авг. – С.2.

Иванов, В. А. Умсăмах: [Илле Тукташ çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май] / В. А. Иванов // Тукташ, И. С. Этем çуралчĕ: роман / И. С. Тукташ. – Шупашкар: Çĕнĕ вăхăт, 2007. – С.3-5.

Терентьев, Г. И. Тукташ хăçан çуралнă? / Г. Терентьев // Пурнăç çулĕпе. – 2007. – 1 авг. – С.2.

Тукташ, И. С. Манăçми юрăсем юрласа хăварам: [Чăвашсен паллă поэчĕ çуралнăранпа – 100 çул] / И. С. Тукташ // Тăван Атал. – 2007. - № 8. – С.99.

Илле Тукташ // Тăван Атал. – 2008. - № 11. – С.147.

Ефимов, Л. А. Тукташ (Семенов) Илья Семенович: ст./ Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 530: портр.

Терентьев, Г. К. Васянка Никифор Тарасович: ст. / Г. К. Терентьев, Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 107-108: портр.

Волков Александр Иванович
10.10.1946-16.12.1991

А. И. Волков 1946 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче Мăн Этмен ялĕнче служащи çемйинче çуралнă. Этменти, Шĕмшешри, Мăн Вылăри шкулсенче, Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ. Совет çарĕнче службăра тăнă. Йĕпреç районĕнчи Березовкăри вăтам шкулта, Чăвашрадиора, «Тăван Атăл» журналпа «Молодой коммунист» хаçат редакцийĕнче, Чăваш кĕнеке издательствинче ĕçленĕ. Пурнăçĕн юлашки тапхăрĕнче Чăваш телевиденийĕн тĕп редакторĕнче вăй хунă. Çыравçăн малтанхи «Яла таврăнсан» калавĕ «Тăван Атăл» журналăн 1978 çулхи 9-мĕш номерĕнче кун çути курнă. А. Волков 1989 çултанпа СССР Писателĕсен союзĕн членĕ пулнă, вăл 3 кĕнеке авторĕ: «Пирĕн ялсем» (1984), «Ахрăм» (1989), «Пĕчĕк ялăн пысăк çылăхĕ» (1990). А. И. Волков 1991 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнче пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлчĕ.

А. И. Волков пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:
Статьясем

Александр Иванович Волков: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 276.

Агивер, Хв. Калаçаттăмăр-ĕмĕтленеттĕмĕр: [Александр Волков çыравçăн 50 çулĕ] / Хв. Агивер // Тăван Атăл. – 1996. - № 10. – С.71.

Айдаш, Ю. Саша Волкова, пурăннине: сăвă / Ю. Айдаш // Тăван Атăл. – 1996. - № 10. – С.71.

Александр Иванович Волков // Ялав. – 2005. - № 11-12. – С.3. – С.3.

Волков Александр Иванович: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.80: портр.

Ефимов, Л. А. Волков Александр Иванович: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 132: портр.

Галкин Александр Алексеевич
12.02.1928-09.04.2002

А. А. Галкин Чулкаҫ ялӗнче 1928 ҫулхи февралӗн 12-мӗшӗнче Чулкаҫ ялӗнче ҫуралнӑ. Малтан Юнтапари ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта, унтан Нурӑсри педагогика училищинче вӗреннӗ. Унтан пӗр ҫул хушши физкультурӑпа спорт комитечӗн председателӗнче ӗҫленӗ. 1953 ҫулта Чӑваш педагогика институтӗнчен вӗренсе тухнӑ. Чӑваш кӗнеке издательствинче редактор, аслӑ редактор, редакци заведующийӗ, тӗп редакторӑн заместителӗ пулса ӗҫленӗ. 1971-1980 ҫулсенче «Тӑван Атӑл» журналта главнӑй редакторта ӗҫленӗ. 1963 ҫулта ӑна СССР писателӗсен Союзӗн членне илнӗ.

Поэтӑн малтанхи сӑвви («Шыв хӗрринче») «Ялав» журналта пичетленнӗ. Поэтӑн Чылай сӑввисене чӑваш композиторӗсем юрра хывнӑ.

А. Галкинӑн ҫакӑн пек кӗнекесем тухнӑ: «Читлӗхри хӑнасем» (1955), «Пӗчӗк ӗҫҫыннисем» (1958), «Тӑван тавралӑхра» (1959), «Сурӑм шарлакӗсем» (1961), «Юптарусем» (1963), «Туссем» (1964), «Аптраман Раман» (1968), «Ҫунатлӑ Улӑп» (1969), «Пичке пӑкки» (1974), «Шӳтлесе мар» (1977), «Вӑйӑран вӑкӑр» (1978), «Кукӑр пӑшал» (1981), «Сиплӗ сӑмах» (1988). Вӑл вырӑсларан чӑвашла та куҫарнӑ.

Поэта пархатарлӑ ӗҫӗсемшӗн икӗ хутчен Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн, РСФСР Верховнӑй Совечӗн Хисеп грамотисемпе наградӑланӑ, Чӑваш Республика культурин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗн хисеплӗ ятне панӑ.

Унӑн нумай сӑввисене композиторсем юрра хывнӑ, вӗсенчен уйрӑмах ҫаксем паллӑ: «Ҫурхи кунсем вӑраннӑ чух» (Чӑваш Республикин гимнӗ пулса тӑнӑ; кӗвви Г. С. Лебедевӑн), «Юрлар, ай, тантӑшсем», «Тӑван ҫӗршыв», «Савнисем», «Шурӑ роза» тата ыт. те.

И. Тукташӑн ҫакӑн пек кӗнекесем тухнӑ: «Сӑвӑсем» (1930), «Пӗрремӗш ҫӗнтерӳ» (очерк, 1932), «Октябрь силӗ» (сӑвӑсем, 1932), «Ҫамрӑк колхозниксем» (калавсем, 1932), «Вӑкӑр ҫырми» (повесть, 1932), «Чечек ҫыххи» (сӑвӑсем, 1941), «Кӗске калавсем» (1941), «Павел Лаптев» (очерк, 1944), «Хура кушак» (калав, 1944), «Иван Поляков» (очерк, 1945), «Хӗвел» (сӑвӑсем, 1947), «Телей чечекӗ» (сӑвӑлла юмах-драма), «Ҫӗр хуҫисем» (очерк, 1954), «Сӑвӑсемпе юрӑсем» (1958), «Манӑн автан» (ача-пӑча калавӗсем, 1958).

И. Тукташ произведенисене вырӑсларан чӑвашла куҫарассипе те тимленӗ. И. Ивникпе пӗрле «Слово о полку Игореве» повеҫе куҫарнӑ. М. Шолоховӑн «Уҫнӑ ҫерем», «Лӑпкӑ Дон» романӗсен хӑш-пӗр сыпӑкӗсене, М. Горькин «Хӗрпе вилӗм», «Ӑмӑрткайӑк ҫинчен хывнӑ юрӑ» произведенийӗсене, С. Ковпакӑн «Путивльтен Карпата ҫити» кӗнекине, В. Шекспир сонечӗсене, А. Навои, В. Лебедев-Кумач, С. Алымов сӑввисене чӑвашла куҫарнӑ.

Поэт 1957 ҫулхи январӗн 20-мӗшӗнче ӳпке чирӗпе чирлесе вилнӗ.

И. С. Тукташ пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ ҫинчен:
Статьясем

Давыдов-Анатри, В. Тукташпа паллашсан... / В. Давыдов-Анатри // Давыдов-Анатри, В. Юлташсемпе юнашар / В. Давыдов-Анатри. – Шупашкар, 1981.

Эсхель, А. Асран кайми Тукташ: ст. / А. Эсхель // Эсхель, А. Вӑхӑт таппи: ҫулсем, ҫынсем, сӑнсем: ст. / А. Эсхель . – Шупашкар, 1982. – С.213-223.

Малов, А. Илле Тукташпа пӗрле / А. Малов // Тӑван Атӑл. – 1987. - № 9.

Илья Семенович Тукташ: ст. // Ефимов, Л. А. Элӗк енӗ: историпе краеведени очеркӗсем / Л. А. Ефимов. – Элӗк, 1994. – С. 288-290.

секретарьне уйӑрса лартаççӗ. «Вӑтам Атӑл» альманах кӑларас ӗçе те хастар хутшӑнать вӑл. Çак вӑхӑтра кунта В. Иванов-Паймен, Исаев Мӗтри, И. Викторов, С. Шавли тата ытти авторсем те ӗçленӗ. Çакӑнта ӗнтӗ И. Тукташ ял пурнӑçӗ епле çӗнелсе пыни çинчен очерксем, «Вӑкӑр çырми» повесть, калавсем, сӑвӑсем çырать.

Палӑрасса И. С. Тукташ прозӑра палӑрнӑ. Сӑвӑсемпе пӗрлех очерксем, калавсем, повеçсем çырнӑ. 1932-1933 çулсенче унӑн умлӑ-хыçлӑ кӗнекисем, «Октябрь çилӗ» сӑвӑсен пуххи пичетленсе тухаççӗ. Вӗсенче пуринче те романтикӑллӑ çӗкленӳллӗ туйӑм палӑрать.

Илья Семенович – халӑхран тухнӑ поэт. Вӑл халӑх шухӑш-кӑмӑлне витӗр курса тӑнӑ çеç мар, чунӗпе те унпа çывӑх пулнӑ. Çавӑнпа та поэтӑн кашни произведенийӗсенче ӗç хресченӗн чунӗ туллин палӑрса тӑрать. Унӑн сӑнарлӑх мелӗсенче те халӑх чунӗ, унӑн илемлӗх тӗнчи пурри сисӗнет. Ахальтен мар И. Тукташ халӑхӑн сӑмах пултарулӑхне тӗпченӗ, сӑвви-юррисемпе юмах-халапӗсене пухса кӑларнӑ, вӗсем çинчен статьясем çырнӑ: «Ача-пӑча юмахӗсем» (1938), «Чӑваш фольклорӗ» (1949). Вӑлах халӑхӑн сӑмах пултарулӑхӗпе чӑваш литератури аталанӑвӗ çинчен 8-9 классенче вӗренекенсем валли «Чӑваш литератури» учебник çырнӑ.

1932-1933 çулсенче поэт Самарти геологи тӗпчевӗсен институтӗнче вӗренет. 1933 çулта, сывлӑх хавшанине пула, Шупашкара таврӑнать, Чӑваш кӗнеке издательствинче илемлӗ литература редакторӗнче тимлет.

1934 çулта ӑна СССР писательсен Союзӗн членне илнӗ. 1935-1942 çулсенче Чӑваш наука тӗпчев институтӗнче наука сотрудникӗнче ӗçлет, фольклорпа, литературапа пысӑк пӗлтерӗшлӗ тӗпчев ӗçӗсем çырать.

1942-1944 çулсенче поэт фронтра пулать, çар корреспонденчӗн билечӗпе хаяр тӑшмана хирӗç публицистика мелӗсемпе кӗрешет, çивӗч, çулӑмлӑ статьясем, очерксем, тӗрленчӗксем, сӑвӑсемпе калавсем çырать. Совет Союзен Геройӗ чӑваш каччи П. В. Лаптев батарея командирӗ çинчен уйрӑм кӗнеке пичетлесе кӑларать. Вӑрçӑран таврӑнсан И. С. Тукташа Чӑваш АССР писательсен союзӗн правленийӗн председательне суйласа лартаççӗ.

Галкин Александр Алексеевич 2002 çулхи апрелӗн 9-мӗшӗнче Шупашкар хулинче вилсе кайнӑ.

А. А. Галкин пурнӑçӗпе пултарулӑхӗ çинчен:

Статьясем

Енейкина, Г. Ӑсталӑх пархатарӗ / Г. Енейкина // Тӑван Атӑл. – 1993. - № 3.

Александр Алексеевич Галкин: ст. // Ефимов, Л. А. Элӗк енӗ: историпе краеведени очеркӗсем / Л. А. Ефимов. – Элӗк, 1994. – С. 278-279.

Сементер, Ю. Çӗн йӗркелӳ мыскарисем / Ю. Сементер // Хыпар. – 1996. – 21 пуш.

Григорьев, И. Пархатарлӑ çул / И. Григорьев // Хресчен сасси. – 1997. – 9 раштав.

Алексеев, О. Ӗçлӗ çынсен пархатарӗ: [А. Галкин – 70 çул] / О. Алексеев // Хыпар. – 1998. – 11 нарӑс. – 3 с.

Ананьева, А. Ӑсталӑхпа пултаруллӑх: [Чӑваш халӑх поэчӗ А. А. Галкин 70 çул тултарчӗ] / А. Ананьева // Пурнӑç çулӗпе. – 1998. – 12 февр. – С.3.

Луч, Г. Унӑн поэзийӗ çирӗп тӗллевлӗ / Г. Луч // Хресчен сасси. – 1998. – 11 нарӑс.

Сементер, Ю. «Едкие» строки / Ю. Сементер // Совет. Чувашия. – 1998. – 25 февр.

Элментер, И. Тивӗçлипе хакланӑ / И. Элментер // Хыпар. – 2000. – 13 авӑн.

Галкин Александр Алексеевич // Пурнӑç çулӗпе. – 2002. – 13 апр. - С.3.

Павлов, В. Ял-йыш ентешне чысларӗ: [А. А. Галкин поэт-лирик] / В. Павлов // Пурнӑç çулӗпе. – 2003. – 16 июль. – С.1.

Галкин Александр Алексеевич: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.91-92: портр.

Ефимов, Л. А. Галкин Александр Алексеевич: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С.145-146: портр.

Емельянов Прохор Кононович
25.07.1913 – 24.12.1991



П. К. Емельянов 1913 çулхи июлĕн 25-мĕшĕнче Ураскилт ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухсан Элĕкри икĕ сыпăклă шкула вĕренме кĕнĕ. Прохор Кононович комсомол райкомĕн членĕ пулнă май обществăлла ĕçсене активлă хутшăннă. Çак шкултан вĕренсе тухнă хыççăн П. Емельянов Чулхулари автозавод тунă çĕре тухса каять. 1931-1934 çулсенче Чулхулари юханшыв техникумĕнче, Чăваш ялхуçалăх институтĕнче вĕренет, Çĕмĕрлери лесотехникумра учительте ĕçлет. 1935 çулта Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулать. 1942 çултанпа П. Емельянов – фронтра. Вăрçăран таврăннă хыççăн Сĕнтĕрвăррине тухса каять. И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен педагогика институтĕнчи историпе филологи факультетĕнчен заочно майпа вĕренсе пĕтерет. Мĕн пенсие кайичченех Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнче тата вăтам шкулта учитель, директор заместителĕ пулса ĕçлет.

Пĕрремĕш сăввисене вăл «Сунтал» журналта 1930 çулта пичетлесе кăларать. Писателĕн очеркĕсемпе фельетонĕсем Ем. Прохоров, Кăшмантуй псевдонимсемпе тăтăшах пичетленсе тухаççĕ.

1957 çулта П. Емельянов вырăсла «Костя Варкин» ятлă пĕрремĕш пьеса çырса кăларать. Çавăнтан пуçăнать те унăн драматургири ĕçĕ («Родина зовёт», «Где мой папа?», «Судьбы человеческие», «Они любили жизнь» тата ыт.).

П. Емельянов ачасем валли чылай кĕнеке çырса кăларнă («Три встречи», «Марине»). Унăн чăвашла çакăн пек кĕнекесем пичетленсе тухнă: «Çумăр тумламĕ» (1963), «Кăмаша вăрманĕнче» (1971), «Эпĕ сукмакпа пыратăп» (1972), «Икĕ тĕлпулу» (1980), «Юратнă тусăмсем» (1982), «Япаласем ăçтан килнĕ» (1986).

П. Емельянова СССР писателĕсен Союзне 1978 çулта йышăннă. Вăл 1991 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнче вилнĕ.

чĕри», «Кĕрентерчĕç», «Чăн Турă», «Теллей куççулĕ», «Вырăнлă парне» калавсем тата «Кремль сакки сарлака», «Касман Туртакассинчи чап-чап уйăх», «Чечек çыххи», «Коррида, самурайсем тата анăçран тухнă хĕвел».

Ю.П. Терентьев пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:
Статьясем

Терентьев Юрий Петрович: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.414: портр.

Ефимов, Л. А. Терентьев Юрий Петрович: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 516: портр.

Метин, П. Вăхăтсăр таталнă кулă: Юрий Терентьев çуралнăранпа – 50 çул / П. Метин // Тăван Атăл. – 2011. - № 9. – С. 83-88.

Тукташ (Семенов) Илья Семенович
03.08.1907 – 20.01.1957

«… Сăвă çырнă чухне вăл сăмахсене хуçкаламасть, вĕсене сăвă йĕркине асар-писер хиркелесе вырнаçтармасть, кашни сăмах, хăй тĕллĕн тенĕ пек, кал-каллăн вырнаçса пырать. Ритмĕ те, рифмисем те тăкăскан хирĕлсе тăмаççĕ. «Сăмах-юмахĕ шăнкăр-шăнкăр шыв пек юхать», теççĕ кун пек чух чăвашсем. Хăй ирĕккĕн те хăй меллĕн, çăмăллăн та кал-каллăн…».

Аркадий Эсхель

И. С. Тукташ 1907 çулхи августăн 2-мĕшĕнче Мăн Тукташ ялĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Ялти пуçламăш шкултан, унтан Хĕрлĕ Чутайри сакăр çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнă, çамрăклах ĕçе кӳлĕннĕ. 1926-1928 çулсенче Шупашкарти совпартшкулта вĕренет, «Çамрăк хресчен» хаçатпа «Хатĕр пул» журналăн редакцийĕсенче ĕçлет.

1930 çулта ăна Вăтам Атăл крайне, Самара хулине яраççĕ, кунти «Колхозница» хаçат редакцийĕн ответлă

Унăн хайлавĕсем коллективлă кĕнекесенче, çавăн пекех уйрăммăн та пичетленнĕ. Вăл Трубина Мархви ячĕллĕ преми лауреачĕ (1993), Раççей журналисчĕсен, писательсен Союзĕн членĕ (1992, 1997). Поэтессăн сăввисемпе Филипп Лукин, Юрий Кудаков, Юрий Жуков, Зоя Петрова, Надежда Заводскова тата ытти композиторсем те чылай юрă çырнă. Людмила Смолина А. Блокăн, А. Плещеевăн, Е. Трутневан, И. Елисеевăн тата ытти вырăс поэчĕсен произведенийĕсене куçарнă. Людмила Валериановнан çак кĕнекесем тухнă: «Хĕр ĕмĕрĕ - хăналăх» (1993), «Асамлă çулталăк» (1996), «Асамлă калтăрмач» (1998) тата ыт. те.

Л. В. Смолина пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Петровский, Н. «Çил çунат» мĕнпе сывлать? / Н. Петровский // Тантăш. – 1993. – 4 авăн.

Артемьев, А. Людмила Смолина / А. Артемьев // Тăван Атал. – 1996. - № 6. – С.52.

Ефимов, Г. Людмила Смолина / Г. Ефимов // Çил çунат. – 1998. - № 1.

Смолина Людмила Валериановна: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.383: портр.

Ефимов, Л. А. Смолина Людмила Валериановна: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 484-485: портр.

Терентьев Юрий Петрович
14.09.1961 – 25.12.1995



Элĕк тăрăхĕнчи Исванккă ялĕнчен. Мускаври тĕп университетăн журналистика факультетĕнче вĕреннĕ. «Капкăн» журналта ĕçленĕ (редактор, редактор çумĕ). Пурăннă пулсан питĕ палăрса тăма пултарнă çыравçă. 1980 çулсен вĕçĕпе 1990 çулсен пуçламăшĕнче пумай пичетленнĕ: «Амăш

П. К. Емельянов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Прохор Емельянов: кĕске биографи // Ялав. – 1993. - № 7.

Прохор Кононович Емельянов: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 279-281.

Алексеев, А. Пултаруллă прозаик, драматург / А. Алексеев // Тăван Атăл. – 1995. - № 5.

Терентьев, Г. Пултарулăх çулĕпе: [Прохор Емельянов çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май] / Г. Терентьев // Пурнăç çулĕпе. – 2003. – 26 июль. – С. 3.

Емельянов Прохор Кононович // Ананьев, А. А. Офицеры Великой Отечественной … (Уроженцы Аликовского района Чувашской Республики): кн. памяти / А. А. Ананьев. – Чебоксары: Новое Время, 2005. – С. 98. – (Библиотека Чувашской народной академии).

Емельянов Прохор Кононович: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.133: портр.

Кириллова, Т. Н. Емельянов Прохор Кононович: ст. / Т. Н. Кириллова // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 200: портр.

Ефимов Арсений Ефимович
31.05.1915 - …11.2011

Арсений Ефимович Ефимов Элĕк районĕнчи Мăн Вылă ялĕнче 1915-мĕш çулхи майăн 31-мĕшĕнче çуралнăскер, пĕтĕм кун-çулне çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçе халалланă. Чи малтанах хăй те ялти, Штанашри колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче тата Етĕрнери педтехникумпа Шупашкарти пединститутра пĕлĕве çирĕплетнĕ. Арсений Ефимович 1933-1935 çулсенче Мăн Вылăри пуçламăш шкулта 3-4 классене вĕрентнĕ. Унтан 1938-1939 çулсенче,

Кĕçĕн Тăванти çичĕ класслă шкулта вĕрентӳ енĕпе директор çумĕ тата вырăс чĕлхи учителĕнче ĕçленĕ.

Хĕрлĕ Çара ăна 1939 çулхи кĕркунне илнĕ. Вăрçă вăхăтĕнче Перемышль хулине, Польша, Венгри, Австри, Чехословаки хулисене ирĕке кăларассишĕн çапăçнă. Вăрçăран вăл 1945-мĕш çулхи кĕркунне таврăннă та Кивуйри Матрёна Федоровнăпа (1921 - 1998) мăшăрланса 52 çул килĕштерсе пурăннă, 6 ача ӳстерсе пурнăç çулĕ çине тăратнă.

1980 çулта пенсие кайнă. Учительти ĕç стажĕ - 42 çул.

1936-1938 çулсенче Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ сăвăсем çырма пуçланă. Арсений Ефимов икĕ кĕнеке авторĕ: «Хочу гореть ярче» (1999), «Радуюсь светлому дню» (2006). 1999 çулхи кĕркунне ЧР писательсен союзне кĕнĕ.

2011 çулта ноябрь уйăхĕнче вилнĕ.

А. Е. Ефимов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Савельев, Г. Авторпа унăн сăввисем çинчен / Г. Савельев // Ефимов, А. Е. Эпĕ çутăрах çунасшăн: тĕрлĕ çулсенче çырнă сăвăсемпе поэмăсем / А. Е. Ефимов. – Чебоксары, 1999. – С.3-4.

Ефимов, А. Чăваш ялĕнчи учитель: сăвă [Арсений Ефимов хăй çинчен çырнă сăвă] / А. Ефимов // Пурнăç çулĕпе. – 2005. – 4 июнь. – С.5.

Хаçат тусĕ // Пурнăç çулĕпе. – 2005. – 4 июнь. – С.5.

Савельев, Г. Малтанхи ялкорсем / Г. Савельев // Пурнăç çулĕпе. – 2007. – 10 авг. – С. 5.

Терентьев, Г. К. Ефимов Арсений Ефимович: ст. / Г. К. Терентьев // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 204: портр.

Савельев, Г. Ялкортан поэт таран… / Г. Савельев // Пурнăç çулĕпе. – 2010. – 10 нояб. – С. 3.

Силивестрова, А. Вăрçă витĕр тухнă / А. Силивестрова // Пурнăç çулĕпе. – 2010. – 11 июнь. – С.1.

Артемьев, А. Паллашăр: В. В. Синичкин / А. Артемьев // Пурнăç çулĕпе. – 1997. – 21 çурла.

Савельев, Г. В. В. Синичкин писатель шăпи / Г. Савельев // Ялав. – 2004. - № 6.

Хурланса сывпуллашрĕç: некролог // Пурнăç çулĕпе. – 2004. – 30 апр. – С.6.

Синичкин Виссарион Вениаминович: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.375: портр.

Ефимов, Л. А. Синичкин Виссарион Вениаминович: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 482: портр.

Кондратьев, В. Хăйĕн ĕмĕрĕнче çичĕ кĕнеке пичетлесе кăларнă / В. Кондратьев // Пурнăç çулĕпе. – 2010. – 27 нояб. – С.5.

Савельев, Г. Синичкинсем: док.очерк / Г. Савельев // Пурнăç çулĕпе. – 2010. – 24 март. – С.3.

Смолина Людмила Валериановна
21.01.1962

«… Çамрăк сăвăçăн поэзийĕ темле хăйне евĕрлĕ сĕтеклĕ те ытарлă чĕлхипе тыткăнлать мана. Сăввисем кăшкăрашуллă мар унăн, шалтан, чун хавалĕпе çырнă сăвăсем.Сăмахĕсем сулмаклă, витĕмлĕ, сăнарлă… »

Александр Артемьев

Л. В. Смолина 1962 çулта Ярхуньушкăнь ялĕнче çуралнă. Вăл Surăмварринчи пуçламăш, Крымсарайкăри вăтам шкулсенче вĕреннĕ. 1985 çулта чăваш патшалăх университетĕнчи историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Шупашкарти ЧХБК фабрикинче, 75 № ача садĕнче воспитатель пулса ĕçленĕ. 1992-2002 çулсенче «Çил çунат» журналта литературăпа искусство пайĕнче, тĕп редакторта тимленĕ.

Синичкин Виссарион Вениаминович
06.01.1936 – 2003



В. В. Синичкин 1936 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче Мăн Ямаш ялĕнче колхозник çемйинче çуралнă. Ялти шкула, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанашри вăтам шкула пĕтернĕ. Шкулта вĕреннĕ вăхăтрах район хаçатĕнче пичетленнĕ, шкулти стена хаçачĕ валли сăвăсем ăсталанă. 1955-1958 çулсенче Тинĕс Çар авиацийĕнче службăра тăнă. Çар хыççăн В. Синичкин ЧАССР шалти ĕçсен министерствинче, ОБХСС уполномоченнăйĕнче ĕçленĕ.

1979-1986 çулсенче чăваш кĕнеке издательствин редакторĕнче, Чăваш писателĕсен союзĕнче илемлĕ литературăна пропагандăлакан уйрăмăн заведующийĕнче ĕçлет. Мускаври кооперативлă институтран заочно майпа вĕренсе тухать. Тивĕçлĕ канăва тухиччен Виссарион Вениаминович Чăваш писателĕсен Атăл Леш енчи кану çурчĕн директорĕнче ĕçленĕ.

В. Синичкин писатель хăйĕн ĕмĕрĕнче çичĕ кĕнеке пичетлесе кăларнă: «Салтак тутăрĕ» (1981), «Çулăмсăр тĕтĕм» (1983), «Салтак амăшĕ», «Пуçлăха мĕнле юрамалла-ши?» (1986), «Кăвак чаршав» (1987), «Таврăннă телей» (1991), «Хĕвел ури» (1996) тата ыт. те. Ленинград писателĕ Вильям Козловăн «Чул утрав президенчĕ» кĕнекине чăвашла куçарнă. К. В. Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕ унăн «Салтак амăшĕ» пьесине сцена çине кăларнă.

Виссарион Синичкин пурнăçĕ 2003 çулхи кĕркунне Çĕнĕ Шупашкар хулинче (вăл унта пурăннă) сарăмсăр татăлнă. Ăна тăван ял çăви çине илсе килсе пытарнă.

В. В. Синичкин пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:
Статьясем

Виссарион Вениаминович Синичкин: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 293.

Лисаев, И. Иксĕмĕре калав паллаштарчĕ / И. Лисаев // Ялав. – 1995. - №10.

Железнов Петр Федорович
17.08.1939 – 1992



П. Железнов 1939 çулхи августăн 17-мĕшĕнче Тавăт ялĕнче çуралнă. Малтанах Тавăтри пуçламăш, Ураскилтри вăтам шкулта вĕреннĕ, унтан – Ленинградри касхи шкул пĕтернĕ.. Унăн произведенийĕсем районти, республикăри, «Дружба», «Молодой Ленинград» хаçат-журналсенче пичетленнĕ. Петр Федоровичăн «Этот маленький хороший город» çырнисен пуххи (Чувашгиз, 1978) тухнă.

П. Железнова РСФСР писателĕсен Союзĕн членне йышăннă, Раççей Федерацийĕн писательсен хисеп грамотипе наградăланă.

П. Ф. Железнов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:
Статьясем

Егоров, В. Хăй тĕллĕн вĕреннĕ çыравçă / В. Егоров // Пурнăç çулĕпе. – 2007. – 14 февр. – С. 3.

Железнов Петр Федорович // Календарь 2009. Праздники церковные, государственные. Юбилеи и дни рождения / сост. А. А. Ананьев. – Чебоксары: Новое Время, 2009. – С. 78.

Терентьев, Г. К. Железнов Петр Федорович : ст. / Г. К. Терентьев // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 212: портр.

Золотов Анатолий Арсентьевич
20.12.1940

А. А. Золотов 1940 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче Синер ялĕнче çуралнă. Ашшĕ - Золотов Арсений Иванович (1898-1966) – ялти учитель, Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен шкултан вĕренсе тухнă, амăшĕ - Золотова Анна Сидоровна (1904 - 1988) – колхозра ĕçленĕ.

1958 çулта Элĕкри вăтам шкула ылтăн медальпе пĕтерне, 1963 çулта – Чăваш патшалăх педагогика институтне, физикăпа математика факультетне, унтан, 1973 çулта – Ташкентри аслă пĕлӳллĕ çар училищине пĕтерне.

1963 çулта Вăрмар районне кĕрекен Энĕшпуçри вăтам шкулта физика учителĕ, 1966-1967 çулсенче – Элĕк районĕнчи РОНО инспекторĕнче пулса ĕçленĕ.

А. А. Золотов Чăваш халăх академийĕн членĕ, «За службу Родине в Вооруженных Силах СССР» 3-мĕш степенлĕ орденпа, «За полезное» Раççей Федерацийĕн Совечĕн ылтăн медальпе, «Первый трижды Герой Советского Союза А. И. Покрышкина» медальпе наградăланă.

А. А. Золотов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:
Статьясем

Анатолий Арсентьевич Золотов // Древо жизни (от пращура Федора до наших дней – 1779 - 2005) / В. А. Золотов, В. Т. Золотов, А. А. Золотов. – Синерь, Аликово, Чебоксары, СПб., 2005. – С. 119-120: портр.

Ефимов, Л. А. Золотов Анатолий Арсентьевич : ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост.Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 221: портр.

Золотов Анатолий Арсентьевич // Золотов, В. А. Золотой человек и продолжатели его дела / В. А. Золотов, В. Т. Золотов, Л. А. Ефимов. – Чебоксары: Новое Время, 2010. – С. 111: ил.

Савельев Геннадий Александрович
08.01.1950

Г. Савельев Мăн Ямашри учитель çемйинче 1950-мĕш çулхи январĕн 8-мĕшĕнче çуралнă. Ялти сакăр çул вĕренмелли шкулта, Шупашкарти саккăрмĕш профтехучилищĕре, Çĕрпӳри ял-хуçалăх техникумĕнче вĕреннĕ. Совет Çарĕнче тăнă. Унтан таврăнсан Мăн Ямашри колхозра, Элĕкпе Çĕмĕрле тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи энергопредприятисенче ĕçленĕ. Пĕр хушă Элĕкри радиовещани редакцийĕнче те, Çĕнĕ Атикасси вăтам шкулĕнче те ĕçленĕ.

Г. Савельев республикăри хаçат-журналсемпе тата радиовещани редакцийĕсемпе тачă çыхăну тытать. 1995 çулта Чăваш Республикин журналистсен Союзĕн членне илнĕ, 1996 çулта - Чăваш Республикин писательсен Союзĕн членĕ, 2007 çулта – Чăваш Республикин халăх академикĕ. Геннадий Александровича хисеплĕ краевед ятне панă, Чăваш Республикин пичет енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн Хисеп грамотипе наградăланă (1998). А. Талвир ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ (2004).

Г. Савельевăн çакăн пек кĕнекесем пичетленсе тухнă: «Ямаш – тĕне кĕмен чăваш» (1995), «Утатпăр пурнăç çулĕпе» (1998), «Село мое родное» (2003), «Люблю тебя, мой край родной!» (2007).

Г. А. Савельев пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:
Статьясем

Юхма, М. Ялта пурăнакан çыравçă / М. Юхма // Ялав. – 2000. - № 2. – С. 96.

Юхма, М. Çырас вăй-халĕ чакмасть-ха / М. Юхма // Пурнăç çулĕпе. – 2005. – 15 янв. – С.3.

Ефимов, Л. А. Савельев Геннадий Александрович: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 455: портр.

Родионов (Ĕмĕт) Иван Владиславович
1986 г.р.

И. Родионов 1986 çулта Чулкаç ялĕнче çуралнă. Вырăс Сурăмĕнчи вăтам шкул, Чăваш патшалăх культурăпа искусство институтне вĕренсе пĕтернĕ. 2005 çулта ăна Чăваш Республикин писательсен Союзĕн членне илеççĕ. И. Родионов сăвăсем çырать, унăн тăвата кĕнеке тухнă («Чĕре туйăмĕсем», «Чун-чĕре туртăмĕ», «Юрату вăрансан» тата ыт.). Хăй çамрăк пулин те, унăн сăввисенче хальхи пурнăç вĕресе, шавласа тăрать. Иван Родионов ачаран чăваш литературине юратса ӳснĕскер, тавралăха сăнама, çут çанталăк илемне туйма-курма пĕлет, çавăнпах ĕнтĕ ун чун-чĕринчен илемлĕ сăвăсем шăрçаланса тухаççĕ. Сăввисем кĕвĕллĕ пулнă май, композиторсем юрра хываççĕ.

Чулкаçра клуб заведующийĕнче ĕçленĕ.

И. В. Родионов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Терентьев, Г. Çамрăк сăвăç çуралчĕ / Г. Терентьев // Пурнăç çулĕпе. – 2005. – 5 июнь. – С.5.

Ефимов, Е. Л. Родионов Иван (Ĕмĕт): ст. / Е. Л. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 448.

Золотов (Арис) Аркадий Иванович
29.01.1901 – 01.06.1942

Чăваш литературинче критика жанрне аталантарас тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ писательсенчен пĕри – Аркадий Иванович Золотов 1901 çулхи январĕн 29-мĕшĕнче Синер ялĕнче, вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. 1909 – 1915 çулсенче Элĕкри икĕ класлă училищĕре вĕреннĕ, 1915 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне кайса кĕнĕ.

1919 çулта Чĕмпĕр шкулĕнчи ытти çамрăксемпе пĕрле хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне тăнă. 1921 çул пуçламăшĕнче каллех Чĕмпĕре пынă, унта учительсем хатĕрлекен институтра вĕреннĕ.

1928-1931 çулсенче А. Золотов «Канаш» хаçатпа «Сунтал» журнал редакторĕ пулнă, çав вăхăтрах «Капкăн» журналăн кулленхи ĕçне ертсе пынă. Республикăра радио ĕçне те вăлах йĕркелесе янă. 1931 çул хыççăн пĕр вăхăт вăл – чăваш писателĕсен организацийĕн правлени председателĕ, унтан – рабфак директорĕ.

1934 çулта ăна Пĕтĕм Союзри писательсен пĕрремĕш съездне делегат туса янă, унта вăл чăваш писателĕсен пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ çинчен сăмах тухса каланă.

А. Золотов литература ĕçне прозăран тытăннă. Унăн малтанхи «Çутă пăнчă» ятлă очеркĕ 1925 çулта «Канаш» хаçатра пичетленнĕ. Çавăн хыççăн пичетленнĕ очерксемпе калавсенчен паллăраххисем çаксем: «Вăй хамăрта», «Хресченсем патша çуртĕнче», «Юн чĕнет», «Ленин çуралнă çĕршывра» (1925), «Йӳçсе хăпарать», «Типпе тухрĕ», «Катаччи» (1926), «Ĕçлетпĕр хуллеççĕн», «Куçне кастарма больницăна кайни», «Тутлисемпе йӳççисем», «Яланах хатĕр» (1927), «Икĕ тĕнче» (1932), «Чапаевла …» (1935).

Чăваш литературинче А. Золотов пуринчен ытла критикăллă статьясем çырнипе паллă. Вырăсларан чăвашла куçарнисенчен унăн пултарулăхĕнче Д. Фурмановăн «Чапаев» романĕ уйрăмах паллă вырăн йышăнать.

А. Золотов таса чĕреллĕ писатель пулнă пулин те, ăна 1937 çулта сăлтавсăр айăпланă, 1942 çулта вара унăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă.

А. Золотов 1934 çултанпа СССР писателĕсен Союзĕн членĕ пулнă.

А. И. Золотов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Кĕнекесем

Принципам не изменили. Золотовы – ученики И. Я. Яковлева: к 150-летию со дня рождения И. Я. Яковлева / В. А. Золотов, В. Т. Золотов, А. А. Золотов. – Аликово; Чебоксары: Чувашия, 1998. – 173 с.

Аркадий Золотов: писатель, критик, публицист: к 100-летию со дня рождения Аркадия Ивановича Золотова / сост. В. А. Золотов, В. Т. Золотов, А. А. Золотов. – Чебоксары, СПб., 2000. – 95 с.

Древо жизни (от пращура Федора до наших дней – 1779 - 2005) / В. А. Золотов, В. Т. Золотов, А. А. Золотов. – Синерь, Аликово, Чебоксары, СПб., 2005. – 132 с.

Золотов, В. А. Аркадий Золотов: солдат и педагог, писатель и журналист, переводчик и критик: к 110-летию со дня рождения, к 85-летию со дня организации радиовещания в Чувашии / В. А. Золотов, В. Т. Золотов, А. А. Золотов. – Чебоксары: Новое Время, 2010. – 224 с.: ил.

Статьясем

Аркадий Иванович Золотов: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 281-282.

Золотов Аркадий Иванович: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.147-148: портр.

Ефимов, Л. А. Золотов Аркадий Иванович (Арис) : ст. / Л. А. Ефимов, Г. К. Терентьев // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 221: портр.

Золотов Аркадий Иванович // Золотов, В. А. Золотой человек и продолжатели его дела / В. А. Золотов,

Пласкин Геннадий Алексадрович
01.04.1922-1997

Г. А. Пласкин Патăрьел районĕнчи Анат Туçа ялĕнче 1922 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче çуралнă. Малтан вăл тăван ялĕнчи пуçламăш шкулта, Тури Туçари вăтам шкулта, Патăрьелĕнчи педагогика училищинче вĕреннĕ. Вăрçăра пулнă, ăна Инçет Хĕвелтухăçĕнче Япони самурайĕсене хирĕç çапăçса вĕçленĕ. Çартан таврăнсан «Коммунизм ялавĕ» (хальхи «Хыпар») хаçат редакцийĕнче, пĕр çул учительте ĕçленĕ. 1947 – 1951 çулсенче Чăваш педагогика институтĕнче вĕреннĕ, унта стена хаçат редакторĕ пулнă. Ăна ĕçлеме республикăри учительсен пĕлĕвне хăпартмалли института хăварнă. Кунта учебниксем, учительсене пулăшма методикăлла пособисем пичетлесе кăларнă.

1954 çулта вăл «Ялав» журналăн ответлă секретарĕнче ĕçлеме пуçланă, 1958 çулта ăна Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕ туса хураççĕ. Геннадий Пласкин 20 ытла пĕр пайлă пьесăсем пичетлесе кăларнă, унăн «Шурă хурăн айĕнче» тата «Семафор уçă» пьесисене Чăваш патшалăх академи театрĕнче, «Çав кунсен чапĕ çухалмĕ» драмине (В. Эльпипе пĕрле çырнă) Республикăри çамрăксен театрĕнче лартнă. Унăн пурĕ 10 кĕнеке пичетленсе тухнă. 1993 çулта кун çути курнă «Çавраçил» романĕ уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ăна вулакансем ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Г. Пласкин, 30 çул ытла Элĕкре пурăннă, чылай çулсем хушши районти «Ленин çулĕпе» («Пурнăç çулĕпе») хаçатăн ял хуçалăх пайне ертсе пынă. Вăл – Раççейри писательсен Союзĕн членĕ.

Г. А. Пласкин пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Геннадий Александрович Пласкин: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 284-285.

Ефимов, Л. А. Пласкин Геннадий Александрович: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 422-423: портр.

Осипова Елизавета Борисовна
07.07.1945

Е. Б. Осипова 1945 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнче Витеçӳч ялĕнче çуралнă. И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Элĕкри вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн пĕр хушă Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче вăй хунă, электроаппаратура заводĕнче ĕçленĕ. Чăваш пашталăх университетĕнче вĕренсе диплом илнĕ. 1980 çултанпа «Тăван Атăл» журнал редакцийĕнче ĕçлет. Литературăн пĕрремĕш утăмĕсене 1965-мĕш çулта тытăннă. Осиповăн пĕрремĕш кĕнеки 1982 çулта «Çул пуçламăшĕ» ятпа пичетленсе тухать. Пĕтĕмпе виçĕ кĕнеке кун çути курнă. Тепĕр кĕнеке коллективпа пĕрле тухнă.

Е. Осиповăна СССР писательсен Союзĕн членне илнĕ. Елизавета Борисовнăн çак кĕнекесем тухнă: «Çул пуçламăшĕ» (1982), «Ăшă çумăр» (1986), «Сĕрĕмлĕ пуç» (1988) тата ыт.

Е. Б. Осипова пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Елизавета Борисовна Осипова: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 286.

Ефимов, Л. А. Осипова Елизавета Борисовна: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 397: портр.

В. Т. Золотов, Л. А. Ефимов. – Чебоксары: Новое Время, 2010. – С. 23: портр.

Павлов, В. Аркадий Золотов яланах асра / В. Павлов // Пурнăç çулĕпе. – 2011. – 12 февр. – С.2.

Тĕрлĕ енлĕ талант // Пурнăç çулĕпе. – 2011. – 29 янв. – С. 5.

Золотов Вениамин Тимофеевич
04.08.1937

Вениамин Тимофеевич Золотов 1937 çулхи августăн 4-мĕшĕнче Синер ялĕнче учительсен çемйинче çуралнă. 1955 çулта Элĕкри вăтам шкул, унтан 1960 çулта Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтернĕ. 1960-1961 çулсенче Çĕмĕрле районĕнчи Кăмаша шкулĕнче физика, астрономи учителĕ пулса ĕçленĕ. 1961-1971 çулсенче – Элĕкри вăтам шкулта вĕрентнĕ.

1988 çулта «Советская Чувашия» хаçатăн обозревателĕ пулнă. 1990-1995 çулсенче «Профсоюзный вестник» хаçатăн тĕп редакторĕнче тăрăшнă. Хальхи вăхăтра «Время» хаçатăн тĕп редакторăн çумĕ пулса ĕçлет.

В. Т. Золотовăн произведенийĕсем тĕрлĕ хаçат-журналсенче пичетленеççĕ - «Советская Чувашия» (1967 çултанпа), «Хыпар», «Время», «Учительская газета», «Вести Чувашии», «Молодежный курьер»; «Физика в школе» (Мускав хули), «Народное образование» (Мускав хули), «Ялав», «Тăван Атăл», «Капкăн». Унăн çакăн пек кĕнекесем пичетленсе тухнă: «Узелки памяти» (2003), «Всюду юмор» (2004), «Записки инспектора» (2002) тата ыт.

В. Т. Золотова тĕрлĕ хисеп грамотисемпе наградăланă, писательсен, журналистсен членне йышăннă, просвещени отличникĕ ятне панă.

В. Т. Золотов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Избранные места из биографии автора // Золотов, В. Т. Узелки памяти: очерки, рассказы, стихи / В. Т. Золотов. – Чебоксары, 2003. – С.3-4.

Вениамин Тимофеевич Золотов // Древо жизни (от пращура Федора до наших дней – 1779 - 2005) / В. А. Золотов, В. Т. Золотов, А. А. Золотов. – Синерь, Аликово, Чебоксары, СПб., 2005. – С.110-111: портр.

Иванов, В. А. Золотов Вениамин Тимофеевич: ст. / В. А. Иванов, Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 222-223: портр.

Золотов Вениамин Тимофеевич // Золотов, В. А. Золотой человек и продолжатели его дела / В. А. Золотов, В. Т. Золотов, Л. А. Ефимов. – Чебоксары: Новое Время, 2010. – С. 108: портр.

Золотов Виталий Арсентьевич
02.04.1934

Виталий Арсентьевич Золотов 1934 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче Синер ялĕнче çуралнă. Ялти вăтам шкул хыççăн Санкт-Петербургри Тинĕс-Çар радиотехника аслă çар училищине вĕренме кĕнĕ, каярах вара пĕтĕм пурнăçне шывпа тата тинĕспе çыхăнтарнă. Малтан Çурçĕр флотĕнче тинĕс айĕпе çӳрекен кимĕ çинче çар службинче тăнă. Кунта çар чаçĕн командирĕнчен пуçласа радиотехника пайĕн ертӳçине çитиччен ӳснĕ. Тинĕс-Çар флотĕнче пурĕ хĕрĕх çул сыхлавра тăнă Золотов çар офицерĕ: флагман специалисчĕ, адьюнкт, А. С. Попов ячĕпе хисепленекен Аслă Тинĕс-Çар радиоэлектроника училищинче кафедра вĕрентӳçи-доцент тата ытти те. 1989 çулта I рангри капитан запаса тухнă.

Наукăпа тата литературăпа кăсăкланать. Кашнинче, Шупашкара килмессерен çĕнĕ алçыру илсе килет вăл. «Шанчăклăх» (2001), «Древо жизни» (2005), «Никита Бичурин», «О школе и учителях», «Славный сын Отечества» (К 275-летию со дня рождения архитектора Петра Егорова) (2006), «Золотой человек и продолжатели его дела» (2010; соавтор) тата ыт.

Николаева Мария Николаевна
26.11.1921 – 17.08.1994

М. Николаева 1921 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче Шураç ялĕнче çуралнă. Вăл Мăн Вылăри çичĕ çул вĕренмелли, Етĕрнери педагогика техникумне вĕренсе пĕтернӗ.

М. Николаевăна Чăваш Республикин писательсен Союзĕн членне илнĕ. Мария Николаевнăн малтанхи пĕр пайлă пьесисем утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче пичетленсе тухнă: «Эрешмен карти» (1962), «Хурăн сĕткенĕ» (1962), «Сĕрĕм» (1962), «Юлташсем шансан» (1965), «Кун пек те пулкалать» (1965), «Телейлĕ-ши вĕсем?», «Кулас килет» (1967). 1962-1963 çулсенче К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх академи театрĕнче унăн «Сĕрĕм» тăватă пайлă драмине лартнă. 1964 çулта Мускавра «Советский писатель» издательствăра «Черная кошка» повеçĕ вырăсла, 1971 çулта «Хура кушак» повеçĕ Чăваш кĕнеке издательствинче уйрăм кĕнекесемпе тухнă. Çавăн пекех вăл «Куçа-куçăн», «Пĕр ялта», «Телейлĕ-ши эсĕ, Надя?» повеçсен авторĕ.

М. Н. Николаева пурнăçĕпе пултаруллăхĕ çинчен:

Мария Николаевна Николаева: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 298.

Терентьев, Г. К. Николаева Мария Николаевна: ст. / Г. К. Терентьев, Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 385.

Муратов Фёдор Фёдорович
02.02.1944 – 1993

Ф. Ф. Муратов 1944 çулхи январěн 2-мěшěнче Туçи Шěмшеш ялěнче çуралса ÿснě. Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн 1967 çулта Мускаври издательствăпа полиграфи техникумĕнче вĕреннĕ. 1975 çулта И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вырăс чĕлхипе литература факультетĕнчен вĕренсе тухнă, алла диплом илнĕ.

Литературăри ĕçне шкулта вĕреннĕ чухнех тытăннă вăл. 1963 çулта район хаçатĕнче пĕрремĕш сăвăсемпе калавсем кун çути курнă. 1992 çулта ăна писательсен Союзĕн членне илнĕ. Ф. Муратовăн çак кĕнекесем тухнă: «Ĕмĕт, шанăç, юрату» (1988), «Ăраскал кĕввисем» (1992).

Чылай çулсем хушши районта тухса тăракан хаçатра Илья Тукташ ячĕллĕ литература пĕрлешĕвне ертсе пынă.

Ф. Ф. Муратов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Сементер, Ю. Çиле хирĕç / Ю. Сементер // Муратов, Ф. Ф. Ĕмĕт, шанăç, юрату: сăвăсем / Ф. Ф. Муратов. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1988. – С. 3-5.

Фёдор Фёдорович Муратов: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 286.

Ефимов, Л. А. Муратов Фёдор Фёдорович: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 369: портр.

Журналистикăпа литературăри пысăк ĕççемшĕн В. А. Золотова Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ хисеплĕ ят панă. Çавăн пекех ăна Санкт-Петербургри Петровски наукăпа искусствăсен академийĕн чăн членне суйланă.

В. А. Золотов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Золотов, В. Пурнăç йывăççи / В. Золотов; вырăсларан Ю. Силэм куçарнă // Ялав. – 2003. - № 2. – С. 82-85.

Силэс, Ю. Золотов Виталий Арсентьевич / Ю. Силэм // Ялав. -2004. - № 4. – С. 89.

Виталий Арсентьевич Золотов // Древо жизни (от пращура Федора до наших дней – 1779 - 2005) / В. А. Золотов, В. Т. Золотов, А. А. Золотов. – Синерь, Аликово, Чебоксары, СПб., 2005. – С.95-97: портр.

Золотов Виталий Арсентьевич // Календарь 2009. Праздники церковные, государственные. Юбилеи и дни рождения / сост. А. А. Ананьев. – Чебоксары: Новое Время, 2009. – С. 44-45.

Терентьев, Г. К. Золотов Виталий Арсентьевич: ст. / Г. К. Терентьев, Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 223: портр.

Золотов (Ют) Николай Яковлевич
30.07.1898 – 27.03.1967



Николай Яковлевич Золотов 1898 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче Чăваш АССРĕнче, Синер ялĕнче, вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. 1907 – 1913 çулсенче Элĕкри икĕ класлă училищĕре вĕреннĕ, 1913 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне кайса кĕнĕ.

Июнь уйăхĕнче ăна Чĕмпĕре «Чухăнсен сасси» хаçат редакцийĕнче ĕçлеме чĕнсе илнĕ. 1920-мĕш çул пуçламăшĕнче вăл «Канаш» хаçат редакцийĕнче ĕçлеме пуçланă. 1921-1923 çулсенче Хĕвелтухăçĕнчи ĕççыннисен комвузĕнче вĕреннĕ. Унтан «Канаш» хаçат редакторĕ, чăваш совет писателĕсемпе журналисчĕсен «Канаш» союзĕн правлени председателĕ пулнă. Вăл «Сунталпа» «Капкăн» журналсен пирвайхи редакторĕсенчен пĕри пулнă.

Н. Я. Золотов 1927 çулта «Чăваш халăх поэзийĕн очеркĕсене» пичетлесе кăларнă. Çавăн пекех чăваш фольклорне пухса хатĕрлес тĕлĕшпе те нумай ĕçленĕ. Чăваш халăхне Совет влаçне çирĕплетме чĕнекен публицистикăллă статьясем çырнипе пĕрлех чăваш литератури умĕнче тăракан паллă задачăсем çинчен тата уйрăм писательсен произведенийĕсем çинчен критикăллă статьясем те çырнă (чылай статьясем айне вăл «Ют» тесе алă пуснă). Вĕсенчен çаксем уйрăмах паллă вырăн йышăнаççĕ: «Чăваш чĕлхин çулне уçса паракан майсем» (1920), «Чăваш чĕлхи паттăрĕсем» (1921), «Юман тĕлĕкĕсем» (М. Юман тунă йăнăшсем çинчен), «Чăваш сăмахĕ» (Çеçпĕл Мишши пултарулăхĕ çинчен) (1924), «Элкер сăвăçпа унăн критикĕсем çинчен пĕр-ик сăмах», «И. Я. Яковлевпа чăваш шкулĕн юбилейĕсем пирки», «Чăваш хĕрарăмĕ» (1928) тата ыт.

Н. Золотов çырнă паллă ĕçсенчен пĕри вăл – «Краткий очерк народной поэзии чуваш» ятлă вырăсла кĕнеке (1929). Автор унта чăваш халăхĕн халăх хушшинче мĕн авалтан сăмах вĕççĕн çӳрекен сăвви-юррисене тĕплĕн тишкернĕ.

1937 çулхи октябрь уйăхĕнче Н. Золотова сăлтавсăр айăпланă. 1943 çулта тин вăл хăй айăплă маррине кăтартма пултарнă. 1944 çулхи çулла хăй ирĕкĕпе Совет Çарне кайнă,

Матьянова (Телейпи) Ираида Васильевна
19.12.1979

И. В. Матьянова (Телейпи) 1979 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕнче Йăранар ялĕнче çуралнă. 1996 çулта Тенири вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Унтан, 2006 çулта Шупашкарти культура училищине пĕтернĕ. 2006 çултанпа Шупашкар хулинче 166-мĕш номерлĕ ача-пăча садĕнче воспитатель пулса ĕçлет.

И. Матьяновăна Чăваш Республикин писательсен Союзĕн членне 2005 çулта илнĕ. Çав çулах вăл Альпăрт Канаш ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ пулса тăрать. Ираида Васильевнăн чăвашла çак кĕнекесем пичетленсе тухнă: «Чĕрем ыйтнипе», «Çырма урлă сукмак хыврăм». «Мĕн-ши вăл телей, юрату, пурнăç? Мĕншĕн эпир çут тĕнчере пурăнатпăр?» Çак ыйтусене хускатать Ираида Васильевна хăйĕн хайлавĕсенче. Вĕсене сăвăç чи çывăх та юратнă çыннисене: ашшĕ-амăшне, савнă мăшăрне, ачисене, тăван ял-йышне халалласа çырать.

Телейпи илемлĕ, кĕвĕллĕ, тарăн шухăшлă сăвăсем çырать. Вăл çырнă сăвăсене юрра хываççĕ.

И. В. Матьянова пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:
Статьясем

Ирина Телейпи – литература тӳпинчи телей çăлтăрĕ // Пурнăç çулĕпе. – 2005. – 21 сент. – С.4.

Андреева, А. В. Матьянова (Телейпи) Ираида Васильевна: ст. / А. В. Андреева // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 350: портр.

Матьянова (Телейпи) Ираида Васильевна // Календарь 2009. Праздники церковные, государственные. Юбилеи и дни рождения / сост. А. А. Ананьев. – Чебоксары: Новое Время, 2009. – С. 109.

литература сотрудникĕ, Йĕпреç районĕнче тухса тăракан «Çĕнтерÿшĕн» хаçат редакторĕ, «Капкăн» журналта пай заведующийĕ пулса ĕçлет.

1949-1952 çулсенче Г. Мальцев Совет Çарĕнче службăра тăнă. 1961-1965 çулсенче Мускаври тата Ленинградри партин аслă шкулсенче журналистика уйрăмĕнче вĕреннĕ. 1979 çулта ăна СССР писателĕсен Союзĕн членне илнĕ. Г. Мальцевăн чăвашла çак кĕнекесем пичетленсе тухнă: «Çуралнă кун» (1974), «Уй куçлă, вăрман хăлхаллă» (1976), «Пирĕн асанне» (1978), «Парне кунĕ» (1979), «Олегпа Валерик тусĕсем» (1982).

Г. Мальцев çырнă кулăшла сăвăсемпе калавсене такам та вуласа киленнĕ пулĕ. Вăл поэзире те тарăн йĕр хăварнă. Чăваш композиторĕсем Ф. Лукин, А. Орлов-Шуçăм, А. Сергеев, Ю. Кудаков тата ыттисем вăл çырнă сăвăсене юрра хывнă.

Г. Мальцева Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Хисеп Грамотипе тата «Отличник культурного шефства над селом» знакпа наградăланă.

Г. С. Мальцев 1991 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче вилнĕ.

Г. С. Мальцев пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Геннадий Степанович Мальцев: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 287.

Иванова, И. Мальцева асăнса / И. Иванова // Хыпар. – 1999. – 12 нарăс.

Степанов, В. Пултарулăх çулĕпе / В. Степанов // Пурнăç çулĕпе. – 1999. – 12 февр.

Мальцев (Кенаш Мучи) Геннадий Степанович: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.255: портр.

Михайлова, Т. В. Мальцев (Кенаш Мучи) Геннадий Степанович: ст. / Т. В. Михайлова, Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 340-341: портр.

1945 çулхи август уйăхĕнченех Тăван çĕршыва паттăррăн хÿтĕленĕ. Салтакран вăл Çĕмĕрле хулине таврăннă, хăйĕн юлашки кунĕччен унта сывлăх учрежденийĕнче ĕçленĕ, партипе совет организацийĕсен ĕçне малтанхи пекех хастар хутшăннă.

Н. Золотов 1967 çулхи мартăн 27-мĕшĕнче вилнĕ.

Н. Я. Золотов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Кĕнекесем

Принципам не изменили. Золотовы – ученики И. Я. Яковлева: к 150-летию со дня рождения И. Я. Яковлева / В. А. Золотов, В. Т. Золотов, А. А. Золотов. – Аликово; Чебоксары: Чувашия, 1998. – 173 с.

Золотов, А. А. Николай Яковлевич Золотов: к 110-летию со дня рождения Н. Я. Золотова, к 85-летию со дня организации Союза журналистов и писателей «Канаш» / А. А. Золотов, В. А. Золотов, В. Т. Золотов. – Чебоксары: Новое Время, 2008. – 172 с.: ил.

Статьясем

Золотов, В. Çĕршыв шăпи – унăн шăпи / В. Золотов // Пурнăç çулĕпе. – 1998. – 6 çурла.

Изоркин, А. Çунатсене хуçсан талант та сÿнет / А. Изоркин // Хыпар. – 1998. – 30 утă.

Золотов Николай Яковлевич: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.149-150: портр.

Хаçат редакторĕсем // Хыпар. – 2006. – 10 пуш.

Капитонова, И. Публицист, ăста куçаруçă / И. Капитонова // Пурнăç çулĕпе. – 2008. – 30 июль. – С. 3.

Золотов, В. Т. Золотов Николай Яковлевич: ст. / В. Т. Золотов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 224: портр.

Канюков Владимир Яковлевич
08.01.1926 – 18.05.1983



Владимир Яковлевич Канюков 1926 çулхи январĕн 8-мĕшĕнче Çĕнкас Юнтапа ялĕнче çуралнă. 1940 çулта Юнтапари тулли мар вăтам шкул, 1943 çулта Нурăсри педагогика училищинчен вĕренсе тухнă. 1943 – 1946 çулсенче В. Канюков Совет Çарĕнче пулнă. 1946–1947 çулсенче Мускаври библиотека институтĕнче вĕреннĕ. Кайран Шупашкарти педагогика институтне куçнă. Ăна филологи наукисен докторĕ М. Я. Сироткин профессор лекцийĕсем уйрăмах хавхалантарнă. В. Канюков 1950 çулта институтран ăнăçлă вĕренсе тухнă. Ăна унтах ĕçлеме хăвараççĕ.

1954 çулта «Основные этапы развития чувашской детской литературы» ятлă ĕçшĕн филологи наукисен кандидачĕ ятне панă. Наукăпа тĕпчев институтĕнче литературăпа искусство секторĕн сотрудникĕ тата заведующийĕ пулса ĕçлет, литературăпа тĕпчев ĕçне анлăн хутшăнать. Владимир Яковлевич К. Ивановпа Çеçпĕл Мишши, Н. Шупуççыннипе Ф. Павлов тата ыттисем çырнисене пухса кăларас енĕпе тăрăшать, тĕпчев ĕçĕсем çырать.

Çыравçă чылай кĕнеке кăларнă: «Ача-пăча сăмахлăхĕ» (1964), «Касрăм-касрăм пĕрене» (1967) – ачасем валли пухса хатĕрленĕ сăвă-юрă кĕнекисем, «Николай Шупуççынни», «Трубина Мархви» - паллă писательсен пурнăçĕпе пултаруллăхĕ çинчен çырнă. Çавăн пекех унăн вырăсла çак кĕнекесем тухнă: «От фольклора к письменности» (1971), «Проблемы народности классической чувашской литературы и фольклора» (1973), «Развитие литературы и народные художественные традиции» (1979).

1964 çулта СССР Писательсен союзне кĕнĕ учĕнăй литература ыйтăвĕсемпе хаçат-журналта вуншар статья пичетленĕ.

В. Я. Канюков Шупашкарта 1983 çулхи майăн 18-мĕшĕнче вилнĕ.

А. Малов куçару ĕçĕнче палăрнă. Вăл чăвашла Д. Р. Бернс, Т. Шевченко, Л. Украинки, А. Кольцов, М. Джалиль, К. Федин, А. Барбюс повеçĕсене куçарнă. А. Малов куçарнă кĕнекесем çаксем: «Три медведя. Л. Толстой» (1954), «Поддубенские частушки. С. Антонов» (1955), «Товарищ Ваня. Шлуху С.» (1958), «Тихий Дон. 2, 3, 4 книги» – (1963, 1974, 1979 гг.), «Синяя тетрадь. Казакевич Э.» (1976).

А. Малова СССР писателĕсен Союзĕн членне 1974 çулта илнĕ.

А. В. Малов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:
Статьясем

Аркадий Васильевич Малов: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 288.

Степанов, В. Талантлă тăлмачă, поэт / В. Степанов // Пурнăç çулĕпе. – 1998. – 28 ака.

Желтухин, Г. Сăвăç, куçаруçă, словарь хатĕрлекен / Г. Желтухин // Тăван Атăл. – 2003. - № 4. – С. 61-62.

Малов Аркадий Васильевич: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.253: портр.

Афанасьев, П. В. Малов Аркадий Васильевич: ст. / П. В. Афанасьев // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 336-337: портр.

Мальцев (Кенаш Мучи) Геннадий Степанович
10.02.1929 – 09.12.1991

Г. С. Мальцев 1929 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче Чăрăшкасси ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Çамрăклах вăл ĕçе кӳлĕннĕ: ялта почтальон, звеньевой, агроном пулса ĕçленĕ. 1949 çулта Вăрнар районĕнче радио редакцийĕнче ĕçлеме пуçлать. Ун хыççăн «Коммунизм ялавĕ» хаçатра

Емельянов, А. Маншăн вăл халь те чĕп-чĕрĕ / А. Емельянов // Ялав. – 1998. - № 5. – С.86-89.

Терентьев, Г. Ентеш ячĕ упранĕ ĕмĕре / Г. Терентьев // Пурнăç çулĕпе. – 2004. – 27 март. – С.5.

Лукин Аркадий Васильевич: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.240-241: портр.

Ананьев, А. Пурнăçра пуçа усман / А. Ананьев // Пурнăç çулĕпе. – 2009. – С. 2.

Ефимов, Л. А. Лукин Аркадий Васильевич: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 326-327: портр.

Малов Аркадий Васильевич
26.04.1928 – 25.04.1995



А. В. Малов 1928 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче Мăн Тукташ ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Пуçламăш пĕлӳ тăван ялĕнчи шкулта илнĕ. 1945 çулта Хусанти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн тăван колхозра ĕçленĕ. 1946-1950 çулсенче Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. 1950-1953 çулсенче Совет Çарĕнче службăра тăнă.

А. Малов ĕçĕ-хĕлĕ журналистикăпа çыхăннă. 1953–1955 çулсенче вăл Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕ, 1955-1962 çулсенче «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн культура пайĕнче, 1963-1970 çулсенче – «Ялав» журналăн ответлă секретарĕ, 1978 çултанпа – «Тăван Атăл» журналăн критикăпа публицистика пайĕн редакторĕ.

Унăн пĕрремĕш сăвви «Ялав» журналта 1949 çулта пичетленсе тухнă. Литература çулĕ çине тăма çамрăка чăвашсен паллă поэчĕ И. Тукташ чылай пулăшнă. А. В. Малов çырнă сăвăсене чăваш композиторĕсем юрăсем хывнă. Вĕсенчен паллăраххисем çаксем: «Краса Родины», «Наша дружба на века», «Крылатый век», «Молодежная песня», «В руки взял я гармонь», «Родине» тата ыттисем.

В. Я. Канюков пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:
Статьясем

Владимир Яковлевич Канюков: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 283-284.

Алексеев, О. Пултаруллă критик-литературовед, педагог / О. Алексеев // Хыпар. – 1996. – 6 кăрлач.

Юмарт, Г. Ача-пăча литературин критикĕ / Г. Юмарт // Хыпар. – 2001. – 11 кăрлач.

Канюков Владимир Яковлевич: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.190-191: портр.

Михайлова, Т. В. Канюков Владимир Яковлевич: ст. / Т. В. Михайлова, Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С.275: портр.

Ларионов Никита Ларионович
07.02.1932

1932 çулта февралĕн 7-мĕшĕнче Кармал Тени ялĕнче çуралнă. Тенири çичĕ çул вĕренмелли, Элĕкри вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă, 1955 çулхине И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх пединститутĕнчи чăваш чĕлхипе литератури факультетне вĕренсе пĕтернĕ. Вăрмар районĕнчи Урнар вăтам шкулĕнче ĕçлеме пуçланă, унтан салтака кайнă, çулталăкран таврăнсассăн çав районти Шăхаль вăтам шкулĕнче виçĕ çул ĕçленĕ. 1959 çултанпа – тăван Элĕк районĕнче. Тени, Хирлеппуç, Элĕк шкулĕсенче чăваш чĕлхипе литературине тата физкультура вĕрентнĕ.

Сăвă-калав çырма ачаллах, варçă çулĕсенче тытăннă. 1958 çулта «Çамрăк коммунист» хаçатра «Палланă кăсăя», 1966 çулта «Ялав» журналта «Йĕнĕри тар иксĕлмен-и» калавсем пичетленнĕ. «Йĕпкĕн хĕрлĕ хăю» (1974), «Олимп каçалăкĕ» (1979), «Олимпийский балл» (1986), «Хĕр тупри»

(2001) повеçсемпе калавсен уйрăм кĕнекисем пичетленсе тухнă.

Район хаçатĕнче калавсем, «Палăрăм», «Уйăх тăхри» романсен, «Çыру мехелĕ» повеçĕн сыпăкĕсем пичетленнĕ. Республикăри хаçат–журналсенче те Н. Ларионовăн произведенийĕсем пичетленнĕ.

Н. Л. Ларионов спортпа та питĕ туслă. Утассипе СССР спорт мастерĕ, темиçе хутчен республика чемпионĕ пулнă, Раççейре ирттернĕ ветерансем хушшинчи ăмăртусене хутшăнса малти вырăнсене йышăннă.

Н. Л. Ларионов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Никита Ларионович Ларионов: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 285.

Ырьят, А. Чĕмпĕр чăваш поэзийĕн çĕнĕ «чĕкеçĕ» / А. Ырьят // Хыпар. – 1998. – 25 утă.

Никита Ларионович Ларионов // Тăван Атăл. – 2002. - №1. – С.4.

Çыравçă та, спортсмен та // Пурнăç çулĕпе. – 2002. – 6 февр. – С. 2.

Ларионов Никита Ларионович: ст. // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии: биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. – С.230: портр.

Ефимов, Л. А. Ларионов Никита Ларионович: ст. / Л. А. Ефимов // Аликовская энциклопедия / сост. Л. А. Ефимов [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. – С. 321: портр.

Лукин Аркадий Васильевич
17.03.1934 – 12.03.1995

А. Лукин 1934 çулхи мартăн 17-мĕшĕнче Лутра Пакăшра колхозник кил-йышĕнче çуралнă.

Вăтам шкултан вĕренсе тухнă, пĕр çула яхăн колхозра, районти хаçат редакцийĕнче тата комсомол райкомĕнче ĕçленĕ, 1954 çулта ăна Шупашкара «Çамрăк коммунист» хаçат редакцине чĕнсе илнĕ. 1962 -1963 çулсенче А. Лукин – «Ялав» журнал редакцийĕн сотрудникĕ. 1965-1966 çулсенче Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕ пулса ĕçленĕ. Каярахпа Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕн литература консультанчĕ, радиовещани комитетĕнче ĕçленĕ.

А. В. Лукин 1957 çултанпа журналистсен Союзĕн членĕ, Чăваш Республика культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Поэтăн чи паллă кĕнекисем: «Чĕре хĕлхемĕ» (1960), «Манăн çăлтăр» (1962), «Çĕнĕ уйăх» (1963), «Эсĕ пулсан…» (1964), «Тул çути» (1967), «Эпир вĕçме çуралнă» (1968), «Хĕвелпе туслашнă çăкасем» (1971), «Тивлет» (1978), «Çĕр тĕнĕлĕ» (1979), «Ыталатăп, çĕршывăм, сана» (1982), «Сăвăсемпе поэмăсем» (1984) тата ыт. Унăн вырăсла «Волшебный мост» (1974), «Воздух» (1983) ятлă кĕнекесем тухнă.

Ф. Лукин, Г. Лебедев, Ф. Васильев, Т. Фандеев, П. Федоров композиторсем Аркадий Васильевич сырнă сăвăсене юрăсем хывнă.

А. В. Лукин пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен:

Статьясем

Сементер, Ю. Кăмăл парни / Ю. Сементер // Лукин, А. В. Сăвăсемпе поэмăсем / А. В. Лукин. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. – С. 5-12.

Аркадий Васильевич Лукин: ст. // Ефимов, Л. А. Элĕк енĕ: историпе краеведени очеркĕсем / Л. А. Ефимов. – Элĕк, 1994. – С. 286-287.

Аркадий Лукин // Ялав. – 1995. - № 6.